Чебоксарская
Ц. Б. им. Горького
0

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

1937 ДЕКАБӖР 22 ЙУНКУН
293 (4805)-мӗш №

ЧӐВАШ КОММУНӖ

19-мӗш ҫул тухать ● ПСК(б)П Чӑваш Обкомӗпе Тӗпӗҫтавкомӗн хаҫачӗ ● Пӗр №-рӗ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСӖ:
Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати
ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторӑн 0—67
Ред. заместителӗн 0—88
Редакци секретарӗн 4—40
Дежурнӑйӑн 6—23

Коммуниссемпе партире тӑманнисен ҫыхӑнуне ҫирӗплет-се, ӳстерсе пырар

Пирӗн тӑван ҫӗршыв нихӑҫан манми кунсенче пурӑнать. ССР Сойузӗн Аслӑ Совет суйлавӗ чӑннипех пӗтӗм халӑх праҫникӗ пулса тӑчӗ. Ҫак суйлавсем хӑйӗн шухӑшӗсемпе, туйӑмӗсемпе пӗрлӗхлӗ, Ленин—Сталин партийӗ тавра таччӑн пӗтӗҫсе тӑракан аслӑ совет халӑхӗн калама ҫук ырӑ та хумхантаракан картинне кӑтартса пачӗҫ.

Пӗтӗм халӑх пӗр шухӑшлӑ пулса Совет Сойуз правителствишӗн тӑрать,—мӗнле те пулин правителствӑшӑн ҫавӑн пек пӗтӗм халӑх тӑнипе етемлӗх историйӗ урӑх пӗлмест. Кунтан тӗлӗнмели те ҫук! Мӗншӗн тесен пирӗн ҫӗршывра туса хунӑ пек обществӑ,—експлоатаци кӗсенӗнчен, класлӑ тата нацилӗ пусмӑрлӑхран хӑтӑлнӑ обществӑ, хуҫари тата йалти ӗҫҫыннисем аслӑн пӗр пулса творчествӑлӑ ӗҫлекен обществӑ историре халиччен нихӑҫан та пулман. **„Тӗнчере ҫавӑн пек чӑннипех ирӗклӗ, чӑннипех демократилӗ суйлавсем нихӑҫан та пулман-ха, нихӑҫан та. Истори ун пек пример урӑх пӗлмест". (Сталин).**

Ленин пророкла калани пирӗн куҫ умӗнчех пурнӑҫа кӗрсе пырать, вӑл каланӑ: „обществӑлӑ пурнӑҫӑн, харпӑрхӑй пурнӑҫӗн те пур йенӗпе те чӑннипех массӑлӑн, халӑхӑн нумайрахӑшӗ, унтан пӗтӗм халӑх хутшӑннипе, хӑвӑрттӑн малала кайасси социалисӑмран **тин** пуҫланать". Ҫавна ак ҫак простой, анчах ӗнентерекен факт кӑтартса тӑрать: сасӑлама суйлавҫӑсем 96,8 процент хутшӑнчӗҫ.

Суйлав умӗнхи икӗ уйах хушши вӑхӑт вуншар мӗлйун ҫынсемпӗн политикӑла пит пысӑк шкул пулса тӑчӗҫ. Вӗсем пирӗн ҫӗршыв большевиксен партийӗ йертсе пынипе, Сталин йертсе пынипе утса тухнӑ ҫул ҫинчен тӗплӗн, пӗтӗм туйӑмсемпе шухӑшласа пӑхрӗҫ те, каларӗҫ:

— Чӑн, ҫак ҫул пӗртеннӗр тӗрӗс ҫул. Епӗр Ленин—Сталин аслӑ партийӗшӗн, халӑхсен аслӑ ҫулпуҫӗшӗн — Сталин йулташшӑн тӑратпӑр, ӑна тав туса ырлатпӑр, пӗтӗм чӗререн йурататпӑр!

Аслӑ Совет суйлавӗнче коммуниссемпе партире тӑманнисен блокӗ чаплӑн ҫӗнтерчӗ. Ҫак блок совет влаҫӗн ҫирӗм ҫулӗ хушшинче пулӑнса, ҫирӗпленсе пычӗ. Вӑл пирӗн халӑхӑн чи лайӑх ывӑлӗсем граждӑн вӑрҫи ҫулӗсенче йухтарнӑ йунпа тытӑкса ҫирӗпленнӗ. Вӑл сталинла пйатилеткӑсенчи аслӑ строителствӑ ӗҫӗсен вӑхӑтӗнче пур йӑвӑрлӑхсене те ӑнӑҫлӑн тӳссе иртернӗ. Вӑл пирӗн ҫӗршывра социалисӑм йаланлӑхах ҫӗнтернӗ никӗс ҫинче ӳссе никам ҫӗнтерейми вӑй пулса тӑчӗ.

Аслӑ Совет депутачӗсен хисепӗнче партире тӑманнисем 288 ҫын. Вӗсен кандидатурисене коммуниссемпе партире тӑманнисен блокӗ тӑратнӑ. Ҫав кандидатсемшӗн коммуниссем те, партире тӑманнисем те пӗр шухӑшлӑ пулса сасӑланӑ, массӑ хушшинче агитациленӗ. Вӗсене хамӑрӑн тӑван ҫӗршывӑн аслӑ оргӑнне суйлани—Ленин—Сталин партийӗ партире тӑманнисен хушшинчи чи лайӑх ҫынсене государство управлени ӗҫне хутшӑнтарнине ҫуттӑн кӑтартса тӑрать.

Пирӗн халӑх хушшинче — **паллӑ организаторла** талантсем, чаплӑ дарованисем, социалисӑм строителствин тӗрлӗрен участкисенче массӑсене йертсе пыма пултаракан ҫынсем—тулӑх ҫӑлкуҫӗ пекех. Йулашки уйӑхсем хушшинче хуҫалӑх ӗҫне, административлӑ ӗҫе, организацилӗ ӗҫе, идеологилӗ ӗҫе нумай, нумай пиншер ҫынсене ҫӗнӗрен ӗҫе лартнӑ, ҫакӑ вӑл—пирӗн вӑхӑтри чӑннипех пит ырӑ паллӑ. Ҫӗнӗ кадрсен хисепӗнче партире тӑманнисем нумай. Вӗсене парти, кашни работнике унӑн ӗҫӗсене кура, вӑл тӑван ҫӗршывшӑн пӗтӗм чӗререн тӑнине кура хакласа, йертсе пырас ӗҫе хӑйулӑн лартса пырать.

Суйлав кампанине иртернӗ чухне пирӗн парти тавра пит нумай кадрсем—партире тӑман активиссем пӗтӗҫрӗҫ. Округсенчи тата участкӑсенчи суйлав комиҫҫийӗсен членӗсем, доверенӑйсем, агитаторсем пулса суйлава хатӗрленес ӗҫе активлӑ хутшӑннӑ партире тӑман активиссен йышӗ мӗлйуншарӑн шутланать.

Историлӗ кун—декабӗрӗн 12-мӗшне ыран тенӗ чухне Мускав хулинчи Сталинский округӗнчи суйлавҫӑсен суйлав умӗнхи пухувӗнче калӑнӑ сӑмахӗнче, участкӑри суйлав комиҫҫи секретарӗ партире тӑман врач Васильева йулташ ҫапла каланӑ: „Парти пире ҫав тери ответлӑ участкӑра ӗҫ тума шанса пани, пирӗнте ӗҫлеме ҫӗнӗрен хавaслӑх вӑрать, пире Ленин—Сталин партийӗ таврa таччӑн пӗтӗҫтерет".

Суйлав кампанин кунӗсемпе ернисем хушшинче парти организацийӗсем йертсе пынипе пит пысӑк ӗҫ туса иртернӗ партире тӑман мӗлйуншар активиссем пуртӗ ҫавӑн пекех шухӑшлаҫҫӗ, ҫавӑн пек туйӑмсемпе пурӑнаҫҫӗ,—кун пирки нимӗнле иккӗленӳ те пулма пултараймасть.

Парти организацисен задачи — ҫав ҫынсене, хаклӑран та хаклӑ капитала, сисӗмлӗн сыхласа усрасси, партире тӑман большевиксен кадрӗсене ӳстерсе, ҫитӗнтерсе пырасси пулать. **Партин кашни организацийӗн чыслӑ ӗҫӗ, тивӗҫӗ—массӑлӑ политикӑлӑ ӗҫ ҫулӗ вырӑнтах пулмала тӑвасси, анчах мар, ӑна пӗрмайах тата ҫӳлерехе хӑпартса пырасси пулать.** Ҫавна вал)ли ӗнтӗ, палӑрнӑ партире тӑман активиссемпе ҫыхӑну тытассине иксӗлтермесӗр хӑвармала ҫеҫ мар, ҫав кадрсене тӑтӑшах йышлантарса пымала. Ӗҫҫыннисен ҫӗнӗ сийӗсен обществӑлӑ ӗҫе хутшӑнас интерес вӑранчӗ,—ҫавна ӗҫе кӗртме пӗлес пулать.

Тӑшмала елементсенчен тасалса пырса, политикӑла обывателсене, тӑшмансене пулӑшакансене хӑй хушшинчен хӑваласа кӑларса, пирӗн парти хӑйӗн ӗретне халӑхӑн чи лайӑх ывӑлӗсене, социалисӑмла тӑван ҫӗршывшӑн пӗтӗм чӗререн тӑракансене, тӑван ҫӗршывӑн тӑшманӗсене хирӗҫ ним хӗрхенӳсӗр кӗрешме хатӗр ҫынсене йышӑнать. Суйлав кампанийӗ вӑхӑтӗнче хӑватлӑ ӗҫленине палӑрнӑ партире тӑман активиссем хушшинче коммунисӑн, Ленин—Сталин аслӑ парти членӗн ҫӳлӗ йатне илтме тивӗҫлӗ ҫынсем сахал мар,—кун пирки иккӗленӳ пулма пултараймасть. Парти организацисен задачи—ҫав ҫынсемпе ӗҫлесси, вӗсене политикӑ тӗлӗшпе ӳсме пулӑшасси пулать.

Партин хӑшпӗр организацийӗсем ҫак пит паха ӗҫре лайӑх пуҫару тунӑ та ӗнтӗ. Ҫапла, Мускаври „Борец" заводӑн литейный цех бригадирне, Дзержинский суйлав округӗнчи партире тӑман чи лайӑх агитаторсенчен пӗрине — Н. С. Смирнов йулташа ПСК(б)П кандидатне илнӗ. Мускаври Красногвардейский районӗнче мухтавлӑ комсомолка-метростройевкӑна, ССР Сойузӗн Аслӑ Совет депутатне—Т. В. Федорова йулташа ПСК(б) Парти кандидатне илнӗ. Ҫав районрах суйлав кампанин активисӗсене Богданов, Ломакин тата ытти йулташсене партийе илнӗ. Дон-ҫи Ростовра табак фабрикӗнчи работница Пучкова йулташ партийе кӗме заявлени панӑ, вӑл суйлав комиҫҫи членӗ пулса активлӑ ӗҫленӗ.

Суйлав кампанийӗ вӑхӑтӗнче ӗҫҫыннисен анлӑ сийӗсем, вӑл шутрах халиччен пирӗн агитацине пропагандӑн организацилӗ вӑйӗ-вӗсем патне ҫитсех те кайман пулнисем те чылайах, политикӑла пурнӑҫа хутшӑнчӗҫ. Суйлав умӗнхи пухусенче килхуҫи хӗрарӑмсем, старик-пенсионерсем т. ыт. те пӗтӗм чӗререн, пӗтӗм кӑмӑлтан, хумханса сӑмах тухса каланисем темӗн чухлех пулчӗҫ. Ҫав ҫынсем—пирӗн хушӑра ӗҫлечӗр, епӗр политикӑла ыйтусемпе интересленнине шайлаштарса пычӗр, тесе шутлаҫҫӗ.

Украинӑри К(б)П Донбассри Сталин йачӗпе тӑракан металлурги заводӗнчи райкомӑн опычӗ ҫинчен „Правда" ҫырса пӗлтернӗччӗ. Парти организацийӗ доверенӑйсем пулса ӗҫленӗ йулташсене халӑх хушшинче агитацилӗ ӗҫсене туса пыма ҫирӗплетнӗ. Кашни 10 кил ҫумне пӗрер-икшер агитатор ҫирӗплетнӗ. Халӑхӑн пур сийӗсем хушшинче те агитацилӗ ӗҫе ҫакарни ниепле те ан пултӑр—ҫакӑн пек татӑклӑ требовани тӑрать партин кашни организацийӗ умӗнче.

ССР Сойузӗн Аслӑ Совет суйлавӗ пӗтӗм тӗнчене, тусӗсене пурне те тата тӑшмансене совет халӑхӗн калама ҫук пысӑк вӑйне кӑтартса пачӗ. Коммуниссемпе партире тӑманнисен тач тӑван сойузне ҫирӗплетсе пырса, халӑхӑн усал тӑшманӗсене—троцкисла-зиновйевла йытушкӑнне ним хӗрхенӳсӗр пӗтерсе пырса, политикӑла обывателсене тӑрӑ шыв ҫине кӑларса пырса, епӗр халӑхӑн вӑйне—пулас ҫапӑҫусенче пуринче те коммунисӑм татӑклӑн ҫӗнтерессин залогне—сыхласа усрӑпӑр, ӳсӗнтерсе пырӑпӑр.

(**„Правда"** умстатйи, 1937 ҫулти декабӗрӗн 19-мӗшӗ).

ИСПАНИРИ ФРОНТСЕНЧЕ

Теруел фронтӗнче республикӑ ҫарӗсен операцийӗсем ӑнӑҫлӑн сарӑлса пыраҫҫӗ. Республикӑ ҫарӗн Теруел ҫине хӗвеланӑҫ йенчен атакӑ тунӑ вӑйӗсем хулари ҫуртсем патнех ҫитнӗ. Республикӑ ҫарӗн хула ҫине хӗвелтухӗҫ йенчен атакӑ тӑвакан чаҫӗсем хула хӗрринчи кварталсем ҫине пераҫҫӗ.

Декабӗрӗн 19-мӗшӗнче пӑлхавҫӑсем темиҫе хут та контратакӑ тунӑ, вӗсене республикӑ ҫарӗсем ӑнӑҫлӑн сирсе пӑрахнӑ. Пӑлхавҫӑсен авиацийӗ хулари гарнизона пулӑшма хӑтланнӑ, вӑл пулӑшу парассине республикӑ авиацийӗ чарса лартнӑ. Республикӑ ҫарӗсем Теруеле хупӑрласа илнӗ унка хӗсӗнсех пырать. Теруел фронтӗнче республикӑ ҫарӗсем пӑлхавҫӑсене 600 ҫын тыткӑна илнӗ.

Декабӗрӗн 19-мӗшӗнче фашиссен авиацийӗ Валенсири мирлӗ халӑх ҫине бомбӑсем пӑрахма икӗ хут хӑтланнӑ. Ҫав кунах пӑлхавҫӑсен авиацийӗ Барселона ҫине бомбӑсем пӑрахасшӑн пулнӑ. Республиканецӑсен зенитлӑ батарейӗсем пеннипе фашиссен самолӑчӗсем кайала тарнӑ.

(ТАСС).

ВЧК—ОГПУ—НКВД ҫирӗм ҫул тултарни

Пысӑк театрти чаплӑ пуху

Декабӗрӗн 20-мӗшӗнче столицӑн пысӑк театрӗнче, ВЧК—ОГПУ—Шалти Ӗҫсен Халӑх Комиссариачӗ ҫирӗм ҫул тултарнӑ йатпа, чаплӑ пуху пулса иртнӗ. Театр залӗ тата йарусӗсем хастарлӑ чекиссемпе, Мускаври фабрикӑсемпе заводсен нумай йышлӑ активӗпе, парти, совет, профсойуз, комсомол тата ытти организацисен представителӗсемпе тулнӑ.

Пухура Молотов, Каганович, Ворошилов, Андрейев, Микойан, Жданов, Йежов, Хрушчев, Шкирйатов, Димитров, Йегоров, Буденный, Фриновский, Булганин т. ыт. йулташсем те пулнӑ. Пухува пынисем партипе правителствӑ руководителӗсене хавaслӑ оваци туса тата „урра" кӑшкӑрса саламланӑ.

Сталин йулташа хисеплӗ президума суйланине пӗлтерсен, оваци ҫӗнӗрен те ҫӗнӗрен вӑйланса кайнӑ. Хисеплӗ президума Сталин, Молотов, Каганович, Ворошилов, Калинин, Андрейев, Косиор, Микойан, Чубарь, Жданов, Йежов, Хрушчев, Булганин, Димитров, Тельман, Хозе Диас йулташсене суйлаҫҫӗ.

Доклад тума ССР Сойузӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн председателӗн заместителӗ А. И. Микойан йулташ сӑмах илет. Вӑл трибуна ҫине тухсан ӑна пухури халӑх тӑвӑллӑн алӑ ҫупса кӗтсе илет. Микойан йулташ доклад туса пӗтернӗ хыҫҫӑн хӗрӳлӗ алӑ ҫупни лӑплансан, Сталин йачӗпе тӑракан автозавод рабочийӗ Максимов йулташ сӑмах тухса калать. Ун хыҫҫӑн хастарлӑ совет разведкин йубилейӗ ҫинчен Менжинский йачӗпе тӑракан заводри рабочи Гозайев, Дзержинский йачӗпе тӑракан Трехгорнӑй мануфактурӑ работници Кондрашова йулташ усӑмлӑ та витӗмлӗ сӑмах калаҫҫӗ.

ССР Сойузӗн Шалти ӗҫсен халӑх комиссарӗн заместителӗ Фриновский йулташӑн сӑмахне пуху хӗрӳллӗн алӑ ҫупнипе кӗтсе илет.

Йулашкинчен пуху—йӑвӑртан та йӑвӑр тата хисеплӗрен те хисеплӗ пост—Аслӑ Социалисӑмлӑ револуци ҫӗнтерсе илнисене сыхлас ӗҫе шанса панӑ мухтавлӑ наркомвнуделецӑсене саламлакан резолуци йышӑнать.

(ТАСС)

Халӑх социалисӑм ҫӗршывӗн шанчӑклӑ хуралне саламлать

Пирӗн тӑван ҫӗршывӑн ӗҫҫыннисем социалисӑм ҫӗршывӗн шанчӑклӑ хуралӗ ВЧК—ОГПУ—Шалти Ӗҫсен Халӑх Комиссариачӗ ҫирӗм ҫул тултарнине пысӑк праҫник вырӑнне хурса паллӑ тӑвать. Мухтавлӑ йубилей йачӗпе пур ҫӗрте те митингсем, пухусем пулса иртеҫҫӗ.

Украинӑ столицинче—Кийевра ВЧК—ОГПУ—Шалти ӗҫсен халӑх комиссариачӗ ҫирӗм ҫул тултарнине чысланӑ уйав ӗҫҫыннисем советӑн мухтавлӑ разведчикӗсене йуратнине кӑтартакан чаплӑ демонстраци пулса тӑнӑ. Шалти Ӗҫсен Халӑх Комиссариачӗн чикӗри ҫарӗсенче боецсем, командирсем тата политработниксем йубилейе пысӑк ҫӗкленӳпе паллӑ тӑваҫҫӗ. Отрйадсенче, заставӑсенче митингсемпе пухусем пулса иртеҫҫӗ. Чикӗри районсенче райӗҫтавкомсемпе йалсоветсен пленумӗсем пулса иртеҫҫӗ. Вӑл пленумсен ӗҫне пограничниксем те хутшӑнаҫҫӗ. Красноармейецсемпе колхозниксем харпӑрхӑй пултарулӑх вечерӗсем органзацилеҫҫӗ.

Горькири Молотов йачӗпе тӑракан автозаводра нумай йышлӑ митингсем пулса иртнӗ. Теплоелектроцентрал строителствин коллективӗ митингра йышӑннӑ резолуцире ҫапла каланӑ:

—Ӗпӗр шансах тӑратпӑр, Шалти Ӗҫсен Халӑх Комиссариачӗн оргӑнӗсем большевикла парти йертсе пынипе тата ССР Сойузӗнчи мӗн пур ӗҫҫыннисем активлӑ хутшӑннипе халӑхӑн мӗн пур тӑшманӗсене малала та пӗр хӗрхенӳсӗр тӑрӑ шыв ҫине кӑларса пӗтерсе пырӗҫ. ССР Сойузӗн Аслӑ Советӗнчи пирӗн депутата Шалти Ӗҫсен Халӑх Комиссарне Йежов йулташа пирӗн аслӑ тӑван ҫӗршывӑн ӗҫҫыннисем вӗсемсӗр йуратса хисеплеҫҫӗ.

Днепропетровск ӗҫҫыннисем мухтавлӑ йубилҫара—Шалти Ӗҫсен Халӑх Комиссариатне хӗрӳллӗн саламлаҫҫӗ.

Днепропетровскӑри паровоз деповӗн аслӑ стрелочникӗ—орденоносец Солодкий йулташ митингра ҫапла каланӑ:

— Мухтавлӑ большевик, пӗрремӗш чекис Феликс Дзержинский йачӗ пирӗн чӗрере йаланах пурӑнӗ. Октаберти Социалисӑмла Аслӑ револуци кӗрешсе илнисем ҫине тапӑнакан мӗн пур халӑх тӑшманӗсене пӗр хӗрхенӳсӗр тӗп тума епӗр чекиссене пулӑшатпӑр. Епӗр, Сталинский чукунҫул ҫинчи стахановецсем-кривоносовецсем, Шалти Ӗҫсен Халӑх Комиссариачӗ ҫирӗм ҫул тултарнине паллӑ туса, Шалти Ӗҫсен Халӑх Комиссариачӗ йачӗпе производствӑлӑ вахтӑсене тӑтӑмӑр.

(ТАСС).

Сталинла виҫҫӗмӗш пйатилеткӑна стахановла кӗтсе илни

ХАРЬКОВ, декабӗрӗн 19-мӗш. (ТАСС). Мускаври тата Мускав облаҫӗнчи фабрикӑсемпе заводсенчи стахановецсем чӗнсе каланине Харьковри предприйатисенче тата транспортра хӗрӳллӗ йышӑннӑ. Декабӗрӗн 19-мӗшӗнче „Серп и молот" заводра, Молотов йачӗпе, Шевченко йачӗпе тӑракан станоксем тӑвакан заводсенче кӑнтӑр канинче нумай йышлӑ пухусем пулса иртнӗ. Вӑл пухусенче чӗнсе каланине сӳтсе йавнӑ. Пухура пӗр сасӑпах Хӗрлӗ столицӑри стахановецсен чаплӑ пуҫарӑвне хапӑл тума йышӑннӑ.

Атӑ-пушмаксем ҫӗлекен пиллӗкӗмӗш фабрика коллективӗ декабӗрӗн 18-мӗшӗнче ҫӗнӗ производствӑлӑ ҫӗнтерӳ тунӑ. Фабрикӑ пӗр кун хушшинче план тӑрӑх 17.720 мӑшӑр атӑ-пушмак ҫӗлесе кӑларас вырӑнне 20.142 мӑшӑр ҫӗлесе кӑларнӑ. Фабрикӑ атӑ-пушмаксене пӗрремӗш хут кун пек нумай ҫӗлесе кӑларнӑ.

Декабӗрӗн 18-мӗшӗнче „Октябӗр" деповӗн Мартынюк йулташӑн пӗрремӗш комплекслӑ бригади пӗр сменӑра промывочнӑй ремонтран „ИС" маркӑлӑ икӗ вӑйлӑ паровоза кӑларса заданийе 264 процент тултарнӑ.

Стахановла рекордсен сталинла уйӑхлӑхӗ

Совет Сойузӗнчи фабрикӑсемпе заводсенчи стахановецсем Мускаври стахановецсем чӗнсе каланине саламлаҫҫӗ

Ҫӗршывӑн промышленнӑҫлӑ районӗсенчен Мускаври тата Мускав облаҫӗнчи фабрикӑсемпе заводсенчи стахановецсем 1938 ҫулхи йанвар уйӑхне стахановла рекордсен сталинла уйӑхлӑхӗ тума чӗнсе каланине предприйатисенче пысӑккӑн хавасланса кӗтсе илни ҫинчен калакан пӗлтерӳсем нумай килеҫҫӗ.

Мускаври стахановецсем чӗнсе каланине Ленинградри Кировски тата Невски заводсенче, Макс Гельц йачӗпе тӑракан заводра т. ыт. предприйатисен мӗн пур цехӗсенче сӳтсе-йавнӑ. Пухусем Мускаври стахановецсен пуҫарӑвне кӑтӑрса хапӑллама йышӑннӑ. Ленинградри рабочисем стахановла рекордсен сталинла уйӑхлӑхне пӗтӗм цехсемпе тата заводсемпе хутшӑнаҫҫӗ.

„Севкабель" заводри стахановецсем хӗрлӗ столицӑри малта пыракансен чӗнӳне хӗрӳллӗн саламласа, 1938 ҫулхи йанварӗн 1-мӗшне ҫулталӑкри программӑна иртерсе тултарма тата чаплӑ ҫӗнӗ рекордсем тума пулнӑ.

Днепропетровск облаҫӗнчи металлургсем хӑйсен обйазателствисене стахановла ӗҫтухӑҫлӑхпе ҫирӗплетеҫҫӗ. Карл Либкнехт йачӗпе тӑракан заводӑн колесопрокатнӑй цех коллективӗ ӗҫӗн чаплӑ тӗслӗхӗсене кӑтартать. Декабӗрӗн 18-мӗшӗнче цех чукунҫул транспортне план тӑрӑх 882 урапа парас вырӑнне 1.234 урапа панӑ.

Горькири „Красное Сормово" заводӑн корпус цехӗнчи рабочисен пухувӗ стахановла уйӑхлӑха хутшӑнма йышӑннӑ тата заводри мӗн пур рабочисене Мускаври стахановецсен чӗнӳвӗ ҫумне хутшӑнма чӗннӗ.

(ТАСС).

ССР Сойуз прокурорӗ Андрей Йануарович Вышинский йулташ—Вольски суйлав округӗ тӑрӑх Сойуз Советне депутата суйланнӑ (Саратов облаҫӗ).

(Сойузфото).

Ханькоу йапонецсем сывлӑшран тапӑнасран сыхланма хатӗрленет

ШАНХАЙ, 20/XII. (ТАСС). Кунта ҫакӑн пек хыпарсем килнӗ: Ханькоура хулана сывлӑшран тапӑнасран сыхлама пысӑк ӗҫсем тунӑ. Хулана сыхланӑ чухне Англирен нумай (100 ытла) кӳрсе килнӗ ҫар самолечӗсем, ҫавӑн пекех зенитлӑ артиллери пысӑк вырӑн йышӑнмала.

Ханькоу хулине йапонецсем тапӑнасран сыхласси темиҫе государствӑ тытӑҫни пекех пулать. Унта, Ханькоура, Германин ҫар советникӗсем пур. Тата унта американец-инструкторӑсем пур, вӗсем тӑрӑшсах китаецсене самолетсемпе вӗҫме вӗрентеҫҫӗ.

Португали правителстви Йапоние пӗлтерни Китай ҫыннисене пит тӑрӑхтарать. Португали правителстви: Йапони Макао патӗнчи утравсене тытса илсен, Португали правителстви йачӗшӗн ҫеҫ протест тӑвать, малтанах ыйтатпӑр—ҫав протест ҫине ҫавӑрӑнса та ан пӑхӑр, тесе пӗлтернӗ мӗн.

Фашисла Германири политикӑла процессем

Мӳнхенра (Германи) политикӑла черетлӗ процесс пулса иртнӗ. Ҫав процесра ҫичӗ ҫынна—хальхи стройа ҫавӑрса ҫапма хатӗрленнисем пулӑшнӑ, тесе айӑпланӑ. Айӑпланисенчен пӗрине ҫичӗ ҫуллӑха катӑргӑна йамала тунӑ. Ытти улта ҫынна тӗрлӗ сруклӑха—виҫӗ ҫултан тӑватӑ ҫуллӑха катӑргӑна йамала, тӗрмене хупмала тунӑ.

Гамбургри суд ҫакӑр ҫынна „хальхи стройа ҫавӑрса ҫапма хатӗрленнӗ" тесе айӑплаҫа, пурне вунтӑват ҫул ҫурӑлӑха катӑргӑна йамала тата тӗрмене хупмала тунӑ.

(ТАСС).

Польшӑн чикӗри ҫӗнӗ провокацийӗ

ШЕПЕТОВКА, декабӗрӗн 16-мӗш. (ТАСС). Декабӗрӗн 14-мӗшӗнче, Шепетовкӑран Здолбуновӑна кайакан 33 №-лӗ совет пойӑсӗ чикӗри контроллӗ блок-постра чарансан, Польшӑн полици влаҫӗсем пирӗн пойӑс бригадине пойӑс составне пӑхса тухас ӗҫре хутшӑнассинчен сирсе, вӑрҫа-вӑрҫах ирӗксӗрлесе пӗр вагон ҫине пухӑнма хушнӑ.

Совет пойӑс бригадине хӑйсен ӗҫӗсене тума пойӑс Польшӑ ҫӗрӗ ҫинче тапранса кайсан ҫеҫ ирӗк панӑ.

Пойӑс вырӑнтан тапрансан 4 минутран хыҫҫӑлти 219 №-лӗ вагон ҫинчи таможньӑ чиновникӗ „вагон ҫунать", тесе кӑшкӑрма пуҫланӑ. Проводник Йаровой йулташ тата пойӑсӑн аслӑ кондукторӗ Кляцкий йулташ вагонӑн служба пӳлӗмне (купене) кӗнӗ ҫӗрте тумбӑчкӑра усал шӑрш сарнӑ паллӑ мар ҫунакан йапалапа сапнӑ ҫӗтӗк-ҫатӑк тата шӑпӑр ҫуннине курнӑ.

Проводник, Польшӑ таможенникӗ хӑратнине пӑхмасӑрах, ҫунакан йапаласене алӑпа илсе кӑларса пӑрахса вагон ҫинче пушар пулма паман.

Вагон ҫинче пулнӑ пассажирсем пирӗн кондуктора Кляцкий йулташа калаcа панӑ тӑрӑх, вӗсем чикӗри постра 219 №-лӗ вагон ҫине капитанпа кӗнӗ паллӑ мар пысӑк ҫын вут тӗртнине курнӑ. Кӳ ҫын ҫав пойӑспах Кийевран Варшавӑна кайакан Польшӑ ҫынни пулнӑ. Пойӑс Здолбуновӑна ҫитсен, Кляцкий йулташ 219 №-лӗ вагон ҫинче пушар пулни ҫинчен акт ҫырнӑ. Польшӑ чукунҫулӗн представителӗ вӑл акт ҫине алӑ пусма килӗшмен.

Кун хыҫҫӑн Польшӑ влаҫӗсем, ӗҫ мӗнле пулнине тӗрӗслесе тухатпӑр тесе, 219 №-лӗ вагона хӑйсен ирӗкӗпех составран вӗҫертсе йулнӑ та проводник Йаровой йулташпа дозорнӑй Плаксу йулташа тытса йулнӑ. Ҫавнашкалах тата Польшӑ влаҫӗсем Здолбуновӑ станцине тӗрӗслӳ ӗҫӗнче хутшӑнма совет чукунҫулӗнче ӗҫлекенсене пыма ыйтнӑ.

Совет чукунҫул влаҫӗсем ку ӗҫе, нойабӗрӗн 30-мӗшӗнчи опыт кӑтартнӑ пек, шанчӑксӑррине тата Здолбуновӑ станцинчи тӗрӗслӳ йеркеллӗ пулма пултарайманнине шута илсе, Польшӑ йенчен ыйтнине сирсе хӑйсен представителӗсене Здолбуновӑ станцине йама килӗшмен, Польшӑ ҫӗрӗ ҫинче саккунсӑр тытса йулнӑ Йаровойпа Плаксу йулташсене тата 219 №-лӗ вагона хӑвӑртрах ССР Сойузне тавӑрса пама ыйтнӑ.

ТАСС асӑрхаттарни. Пӗлсе тӑракан ҫынсенчен ТАСС-а ҫапла пӗлтернӗ: ССР Сойузӗн Варшавӑри полпредствине, Польшӑ влаҫӗсем Здолбуновӗ—Шепетовкӑ участокӗнче пойӑссем ҫӳрессине хӑрушлӑха кӑларса тӑратакан провокацине хирӗҫ Польшӑ правителствине татӑклӑ протест пама хушнӑ.

Выстăвкăна хатĕрленес ĕçре улшăну çук-ха

Пĕтĕм Сойузри йалхуçалăх выстăвкинче пулма права илме Чăваш Çĕрçĕ халăх комиссариатне колхозсенчен пайан куна пурĕ 313 зайавкă панă. Вăл шутран тĕштырă йенĕпе 202 зайавкă, йĕтĕн-кантăрпа—23, пахча-çимĕçпе—6, клеверпа—7, махоркăпа—8, хăмлапа—2, выљăх кăшманĕпе—1, сат пахчи ĕçĕпе—1, таварлă фермăсенчен—16, пыл хурчĕ ĕрчетекенсенчен—4 зайавкă. Кусемсĕр пусне тата йалхуçалăхĕнче малта пыракансенчен 42 зайавкă килнĕ, çак шутран трактăриссенчен—19, тырпул маçтăрĕсенчен—6, йĕтĕн-кантăрçăсенчен—7, махоркă туса илекенсенчен—2, тата çĕрулми, пахча-çимĕç, сат-пахча çимĕçĕ, выљăх-чĕрлĕх ĕрчетекенсемпе йалхуçалăх специалисĕсенчен пĕрер зайавкă килнĕ.

Зайавкăсене Патăрйел, Тăвай, Йелчĕк районĕсем лайăх; Куславкка, Ишлей, Шупашкар тата Шăмăршă районĕсем начар йĕркеленĕ, ку районсенчен 5-шер зайавкă çеç тăратнă.

Пĕтĕм Сойузри йалхуçалăх выстăвкинче пулма зайавкă панисенчен 25—30 центнер таран тырă илекенсем 15 колхоз, 20—25 центнер таран илекенсем—58 колхоз тата 15—20 центнер таран илнисем—120 колхоз.

Йĕпреç районĕнчи „Красный фронтовик“ колхоз пурĕ 402 гектар çинчен кашни гектартан 28,34-шер центнер тĕштырă илнĕ. Патăрйел районĕнчи „Çăлтăр“ колхозра 627 гектар çинчен 26,82-шер центнер илнĕ. Çак колхозрах ыраш па тулă гибричĕ 9,03 гектарлă участкă çинчен 35,33-шер центнер таран илнĕ. Крупскайа йачĕпе тăракан колхозра 501,55 гектар çинчен 27,41-шер центнер, „Пламя Октября“ колхозра 366 гектар çинчен 27,8-шер центнер илнĕ. Йĕтĕн-кантăр сӳсне нумай туса илекен колхозсенчен çав „Çăлтăр“ колхозрах 7,5 гектарлă участкă çинчен 10-шер центнер кантăр сӳсĕ туса илнĕ.

Çĕмĕрле районĕнчи „Красноармеец“ колхозра орденоноскă Чекменева йулташ 18 гектар йĕтĕн лаптăкĕнчен 6,5-шер центнер йĕтĕн сӳсĕ илнĕ. Хĕрлĕ Чутай районĕнчи „Коминтерн“ колхозри звенийевойсем Колесниковпа Вазаков йулташсем 20 гектар çинчен 6-шар центнер йĕтĕн сӳсĕ илнĕ.

Кăçал пыл тухăçĕ начар пулнă пулин те Йĕпреç районĕнчи Крупскайа йачĕпе тăракан колхоз утарĕнчи хуртăсти Воронцов йулташ пурĕ 66 вĕллерен кашнинчен 51,7-шер килограм пыл тата пĕр килограм та 250 гр. ăвăс илме пултарнă. Çавăн пекех, клевер вăрри начар тухнă пулин те Ишлей районĕнчи „Труд“ колхозра 2 гектар вăрлăх участкинчен 5-шер центнер клевер вăрри туса илнĕ, Улатăр районĕнчи „Красное Засурье“ колхозра 3,5 гектар çинчен 4,28-шер центнер клевер вăрлăхĕ илнĕ.

Çапла ĕнтĕ, кăçал вăйлă тырпул илнипе чылай колхозсем Пĕтĕм Сойузри йалхуçалăх выстăвкине тăма тивĕçлĕ пулса тăчĕç. Анчах нумайĕшĕ кăçалхи вăйлă тырпулпа, кăçалхи çитĕнӳсемпе лăпланса ларçĕ-ха, çитес çул татах та вăйлă тырпул илес тĕлĕшпе пайан куна çителĕклĕ кĕрешмеççĕ. Çитес çулхи тырпулшăн кĕрешес ĕçе вăйсăрлатни кăçалхи çитĕнӳсен кăтартăвĕсене те пĕтерсе лартма пултарать, вара Пĕтĕм Сойузри йалхуçалăх выстăвкине çав колхозсем хутшăнмасăрах та йулма пултараççĕ.

Выстăвкăна хатĕрленес тĕлĕшпе тепĕр çитменлĕх пур—колхозсенче експонатсене начар астуса усраççĕ. Хăшпĕр колхозсенче (Шупашкар районĕнчи „Осоавиахим“, Куславкка районĕнчи „Правда“, „Динамо“ колхозсенче, Ишлей районĕнчи Ишек колхозĕнче) кăçал хăварнă експонатсем пăсăлса пĕтнĕ, вĕсене кирлĕ пек йĕркелесе хуман пулнă.

Йулашки вăхăтра хăшпĕр районсенче (Тăвай, Патăрйел, Йĕпреç) експонатсене тĕрĕс пăхса усрама колхозсенче çынсене çирĕплетсе хунă, вĕсене пулăшса тăма агрономсене те çирĕплетнĕ. Пăрачкав районĕнче експонатсене колхозсенчен пуçтарса районти клуб çуртĕнче астуса усраççĕ, Тăвай районĕнче вăрлăх сăнамали лабораторине пуçтарса лайăх йĕркелесе хунă.

Вăрмар, Йĕпреç, Шупашкар, Ишлей, Тутаркас районĕсенче ку таринчен те експонатсене начар астуса усраççĕ-ха. Вăрмар районĕнчи Кив Шулхăн колхозра експонатсене правлени çуртĕн маччи çинче усраççĕ, вĕсене шăшисем те тĕшлесе пĕтернĕ ĕнтĕ. Шăхасан районĕнчи Калинин йачĕпе тăракан колхозра та çакăн пекех. Районсенчи агрономсем колхозсенчи експонатсене хăйсем курмасăрах уйăрса хăварнă тесе пĕлтереççĕ.

Пĕтĕм Сойузри йалхуçалăх выстăвки уçăличчен çур çул ытларах çеç йулчĕ. Выстăвкăна кирлĕ пек хатĕрленсе, хамăрăн 20 çул хушшинчи çитĕнӳсене кăтартма тăрăшмала.

Н. Колесников.

Кăçал та мала тухассишĕн кĕрешетпĕр

ТРАК. Тĕрер йалсоветĕнчи „Правда“ колхозпа Спасов йачĕпе тăракан колхоз 1937 çулта вăйлă тырпул туса илессипе тата тырпула вăхăтра пуçтарса илессипе социалисăмла амăрту договорĕ турĕç. Анчах та Спасов йачĕпе тăракан колхоз çак договора пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлемерĕ, аван çапас ĕçе те декабĕр уйăхне çитиччен чăсрĕ.

„Правда“ колхоз пур ĕçпе те малта пырса, тырпул тухăçне те чылай хăпартрĕ. Вăтам шутпа гектартан ыраш 25 центнер, тулă 28 центнер туса илчĕ, вăтам шутпа кашни гектартан 25-шер центнер тĕштырă илнĕ. Хаљ ку колхоз 1938 çулхи вăйлă тырпулшăн кĕрешме тытăнчĕ, 800 лав тислĕк уйа кăларчĕ.

С. Филиппов.

Хăмларан 85 пин тенкĕ

СЕНТĔРВĂРРИ. Туппай Ĕсмĕлĕнчи „Красная Чувашия“ колхозăн 11 гектар хăмла вырăнĕ пур. Колхоз кăçал çав вырăнтан 85 пин тенкĕлĕх хăмла пухса илнĕ. Хăмла пысăк тупăш панине кура колхозниксем çитес çул хăмла вырăнне татах аслăлатма шутлаççĕ. В. В.

Йалхуçалăх машинисене тирпейлĕ усрамаççĕ

Сĕнтĕрвăрри. Кĕрхи ĕçсене вĕçлесе пĕтернĕ хыççăн, Лапри Чăрăшкассинчи „Социалисăм“, Кив Тутайкассинчи „Кунер“, Еплесри „Хĕрлĕ паттăр“ колхозсенче йалхуçалăх машинисене пурне те пылчăкла тăпраран тасатса, ваннă пайĕсене йусаса, тутăхмалă мар типĕ çĕре, йурçăмăр кĕмен сарайсене пуçтарса лартнă. Анчах, çав хушарах, хăшпĕр колхозсенче машинăсене кирлĕ пек пăхса усрамаççĕ. Шупкари „Красный труженик“, Акшикри „Паттăр“, Чикмеçинăри „ПСК(б) Партин 17-мĕш съесĕ“ колхозсем машинăсене тирпейлĕ тытмаççĕ. Ку колхозсенче хаљ те жнейкăсемпе сейăлкăсене кирлĕ пек тасатса типĕ сарайсене лартман. Ку колхозсенче кĕркунне машинăсем çине çăмăр çунă,хаљ йур çуса лартнă. Çакнашкалах Арзаматăвăри „Ядро“ колхозра плугсене пайанхи куна çитсе те уйран илсе кĕрсе пĕтермен. Шупашкар Есмĕлĕнчи „Атăл“ колхозра плугсем кĕркуннеренпех тимĕрçĕ лаççи умĕнче йапăхса выртаççĕ. Шуљгинăри „Красноармеец“ колхозра плугсем колхозниксен килĕсем умĕнче, карта кĕтессисенче тата тырă склачĕсен кĕтессисенче лараççĕ. Вĕсене хаљ йур хупласа илнĕ. Халех пур колхозсенче те йалхуçалăх машинисене тирпейлесе лартмала, ваннă пайĕсене йусаса 1938 çулхи çуракине хатĕрленмеле.

В. Василйев.

Колхоз йышĕ ӳсет

Çĕнĕ Кавалти колхозра (Вăрмар р.) ватă старикссемпе карчăксен уйрăм пухувĕнче Конституцин 120-мĕш статйи çинчен, колхоз уставĕ тăрăх ĕçлейменнисене тырăн пулăшмали права пурри çинчен ăнлантарса панă хыççăн, 81 çула çитнĕ ватă старик Д. Семенов тата 78 çула çитнĕ карчăк Ф. Моисейева, халиччен колхоза кĕмесĕр тăнăскерсем, колхоза кĕме зайавленисем çырса пачĕç.

67 çула çитнĕ Петров Михаил çемйипех колхоза кĕме зайавлени пама пулчĕ.

Вишневский.



Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ çарĕнчи Н-ски чăçĕн хĕллехи тактикăлă вĕренӳвĕ.
ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: лейтенант Морозов йулташпа (сулахайра) танк командирĕ Беретинов йулташ вырăн пăхаççĕ.

Ф. Кислов фото-ӳкерчĕкĕ (Сойузфото).

Епĕ мĕншĕн хĕпĕртетĕп

Мана Хĕрлĕ Çара илнĕшĕн епĕ питех те савăнтăм. Хĕрлĕ Çар вăл пирĕншĕн чăннипех аслă шкул пулса тăрать. Епĕ çарта иккĕмĕш çул пурăнатăп ĕнтĕ, çара килнĕренпе хамăн политикăлă пĕлӳве нумай ӳстертĕм. Пур предметсемпе те лайăх тата отлично паллăсемпе вĕренсе пыратăп. Лайăх вĕреннĕшĕн тата дисциплинăлă пулнăшăн командирсем мана сакăр хутчен тав турĕç, укçа парса наградăларĕç. Кусемсĕр пусне иртнĕ çура Мускава екскурсине йачĕç.

Пирĕн хаклă тăван çĕршывăн чĕри, йуратнă çулпуç Сталин йулташ пурăнакан Хĕрле столица—Мускав хули мана пĕтĕмпех тĕлĕнтерчĕ. Мускавра епĕ чи малтанах Ленин мавзолейĕнче пулса хаклă Илйича куртăм, унтан Ленин Тĕп Музейне кайрăм. Çавăн пекех Пушкин выстăвкинче, зоопаркра, Мускав—Атăл каналĕ çинче, метрора курса çӳрерĕм. Мускаври курнисене епĕ ĕмерте те манас çук.

Хĕрлĕ Çарта епĕр питĕ савăнăçлă пурăнатпăр. Канмали кунсенче вечерсем тăватпăр. Вăл вечерсенче чăваш красноармейецсем харпăрхăй пултарулăхне кăтартаççĕ: йурлаççĕ, ташлаççĕ, физкуљтура вăййисене выљаççĕ.

1937 çулхи декабĕрĕн 12 мĕшĕ чăннипех пĕтĕм халăх праçникĕ пулса тăчĕ. Вăл кун епĕр те, красноармейецсем, Совет Сойузĕнчи пĕтĕм халăхпа пĕрлех, ССР Сойузĕн Аслă Советне суйларăмăр. Декабĕрĕн 12-мĕшĕнче епĕр большевиксен партийĕшĕн, Сталиншăн, телейлĕ пурнăçшăн сасăларăмăр.

Епĕр тăваттăн пĕр тăван. Аслă пиччĕ Степа—тракторист, Сережă—учитĕл, Колђă—љотчикĕ вĕренет, епĕ—красноармейец. Пурте комсомол членĕ. Çак телейлĕ пурнăçа пире йуратнă çулпуç Сталин йулташ туса пачĕ. Акă мĕншĕн епĕ вĕçĕ-хĕррисĕр хĕпĕртетĕп.

Епĕ пĕлетĕп: пирĕн тăван çĕршыв йĕри-тавра капиталисăмлă государствăсем тăраççĕ. Вĕсем пире хирĕç вăрçă хатĕрлеççĕ. Фашиссем пирĕн çине тапăнас-мĕн пулсан, епĕр, тăвата тăван, пурте Хĕрлĕ Çар ретне тăрса тăшмансене çĕмĕрсе тăкатпăр.

Çавăнпа та хаљ мирлĕ вăхăтра çар ĕçне лайăхрах вĕренер, оборонăна тĕреклетер. Красноармейец пуласси—кашни çамрăкăн чи çӳтă ĕмĕчĕ.

Красноармейец А. И. Михайлов.

Зачотлă конференцисен малтанхи итогĕсем

Кăçалхи çул ПСК(б)Парти Тĕпкомĕ çумĕнчи массăлă-заочнă вĕренмели институт урлă парти историпе ленинисăма вĕренме Çĕмĕрле районĕнче 83 çынна йăвăçтарнă. Парти райкомĕ вĕренме çырăннă çынсене пурне те тĕрĕслесе тухса çирĕплетнĕ. Нойабĕрĕн 20—25-мĕшсенче заочниксен малтанхи зачотлă конференцийĕсем пулса иртрĕç. Зачотла конференцисен итогĕсем тăрăх çакна калама мала.

Зачотлă конференцисенче пĕтĕмпе 62 çын çеç пулнă. Вăл шутран повышеннăй курсра 27 çын вырăнне 21 çын, популярнăй курсра 34 çынтан 22 çын тата ленинисăма вĕренекенсенчен 22 çынтан 19 çын пулнă. Хăш-пĕрисем (зачота пыманнисем) тĕрлĕрен сăлтавсем çине йăвантарма пăхаççĕ. Повышеннăй курсра вĕренекенсем Петровпа Кузьмин коммуниссем епĕр „йерçеймен“ теççĕ. Нумайĕшĕ тата тĕрлĕ çĕре командировкăсене кайнă пирки конференцинче пулаймарĕç (Дымов. Антонов т. ыт. те).

ПСК(б)Парти Тĕпкомĕн постановленинче заочниксене конференци вăхăтĕнче пур ĕçрен те хăтармали çинчен тĕплĕнех кăтартса панă. Кама вăл постановленийе пăсма ирĕк панă-ши?

Литературă çукки те вĕренекенсене чăрмантарать. Уйрăмăнах популярнăй курсра вĕренекенсем валљи кĕнекесем питех те сахал.

Коллективлă радиолекцисем итлессине пайанхи куна çитсе те çирĕппĕн йĕркелемен. Час-часах вĕренекенсем лекци итлеме пымаççĕ.

Çавăнпа та ĕнтĕ нойабер уйăхĕнче пулса иртнĕ заочниксен малтанхи конференцийĕнче вĕренӳ пахалăхĕ çителĕксĕр пыни палăрчĕ. Повышеннăй курсран (21 çынтан) пĕтĕмпе те „хорошо“ отметкăпа—6 çын, „посредственно“—14 çын зачот панă, „отлично“ панисем çук. Çавăн пекех популярнăй курсра та пĕр отличник те çук: 4 çын „хорошо“, 17 çын „посредственно“ тата тепĕр çын „плохо“ паллăсемпе зачот тытнă.

Ленинисăма вĕренмели кружокра Кулйев, Антонов, Ильмент йулташсем аван вĕренсе пыраççĕ. Уйрăмăнах кунта Антоновпа Ильментăн пысăк хастарлăхне палартмала. Вĕсем иккĕшĕ те иртнĕ çулта парти историне вĕренмели повышеннăй курсра вĕренчĕç. Иртнĕ çулта та аван вĕренсе пынă. Антонов—комсомолец, активист.

Тата çакна палăртмала: ИМЗО чăваш уйрăмĕ зачотлă конференцисене планра катарнă тăрăх иртермест. Декабĕрĕн 13-мĕшĕнче ленинисăма вĕренекенсен конференцийĕ пуçланмалаччĕ, анчах конференцине иртерме ИМЗО чăваш уйрăмĕнчен çын пыман пирки конференци пулмарĕ.

Хар. Лисин.

Куљтурăлă-массăлă ĕç çук

ИШЛЕЙ. Анаткас Маркари çамрăксем хушшинче нимĕнле куљтурăлă-массăлă ĕç те çук. Колхоз клубĕ çумĕнче Осоавиахим пуçламĕш организацийĕ, драмкружок, физкуљтура кружокĕ организациленĕ. Анчах вĕсене йертсе, çул кăтартса пыракан çук пирки пĕри те ĕçлемеççĕ. Исак Иванов комсорг шутланать, вăлах физкуљтурă кружокĕн руководителе тата избач. Иванов хайен ĕçĕпе пачах интереслеңмест, вăл „йертсе пыракан“ кружоксем йăлтах арканса кайнă.

Йалти çамрăксем физкуљтурăпа интересленеççĕ, оборона значокĕсен нормине парасшăн, çар ĕçне вĕренесшĕн, партипе правителствă решенийĕсене пĕлсе тарасшăн. Иванов комсорг тарăшманнине пула çамрăксен ĕмĕче пурнăçа кĕмесĕрех йулать.

Комсомол пуçламĕш организацин ĕçĕ те куранмасть. Комсомолецсем хушшинче политикăла вĕренӳ ĕçне тытăнман, пухусем пулмаççĕ.

И. Йамашев.

Н. ЛАХОВ

Китайри вăрçăна пăхса тухни

Йапони Китайа хирĕç вăрçни çине пĕтĕм тенче пăхса тăрать. Йапонцăсем çаплах наступленийи туса пыраççĕ. Хĕçпăшал çителĕксĕррине, вăрçа техники пĕртанмаррине шута илсе, Китай командованийе хайĕн резервисене пĕр сухатмасăр уйăраса хăварас тесе хирĕç тăрассине организацилет.

Йапони çарĕсене нойабĕрте тăрпиннех сурçĕрти фронтра тата Шанхай патĕнче пĕтĕм вăйă хурса çапăçма лекнĕ.

Çурçĕр Китайра йапонцăсем тĕп вăйа Шанси провинцин тĕп хулине—Тайуаньа тытса илес çĕре хунă. Октябĕр пĕтнĕ тĕле Йапони чăçĕсем Шанçин çурçĕр йенче Аслă Китай стени урла каçмали çул тавралĕнчи Китай оборонине лутаркаса тăкнă хыççăн, Тайуаньа тытса илес тĕлĕшпе хастарран çапăçма пуçланă.

Тайуань çине тапăнса пынă Йапони çарĕсене хирĕç Китай чăçĕсем питĕ хыта тăнă. 8-мĕш революцилле халăх çарĕ тата Китайăн ытти чăçĕсем кăнтăр йеннелле тапăнса пыракан Йапони çарĕсене Дайчжоупа Иуаньнин патĕнче вайлăн çапнă. Китай чăçĕсене хирĕç çапăçма тата малала тапăнса пыма Йапони командованийĕ хайĕн вăйне çĕнĕ чăçсемпе тĕреклетмеле пулнă.

Квантун çарĕн оперативлă уйăхне (Йапони Манчжурири оккупацилле çарĕ), Тайуань çине çурçĕр йенчен тапăнса пынă майĕпе хайен хăшпĕр чăçĕсене Суйуаньрен Тайуань патне куçарнă. Çурçĕр йенчи наступлени тунипе Тайуаньа тытса илессине пашмасăр, Йапони командованийĕ çав хушăрах хĕвелтухăç йенчен, Хотаоуань районĕнтен наступлени туса пынă. Йапони çарĕсен наступленийĕ икĕ йенне те шутсăр йĕрипен пынă. Китай чăçĕсем вĕсене хыта хирĕç тăнă. Синчжоу районĕнче (Тайуаньрен çурçĕр йенперех) Йапони çарĕсемпе Чжу Ден 8-мĕш революцилле халăх çарĕ хушшинче вăйлă çапăçусем пуçланса кайнă; çав çапăçусем йапонцăсемшĕн усăлă пулман, вĕсем унта хăйсем тытса илнĕ хăшпĕр пунктсене çухатнă. Хĕвелтухăç йенчен тапăнса пыракан Йапони çарĕсене тусем урлă каçмали сулсен районĕнче, Тайуаньрен пĕр 65—70 километр хĕвелтухăçнерех, тытса чарнă.

Çĕнĕ вăйсем илнĕ хыççăн çеç, йапонцăсем Тайуань çине малала тапăнса пыма пултарнă. Китай çарĕсен ирĕкĕсĕрех чакмалла пулнă. Вĕсем пит йрĕклĕн чакнă: май килнĕ çĕрте пур çĕрте те Йапони чăçĕсене хирĕç тăнă. Çурçĕр йенчен тапăнса пынă Йапони çарĕсем нойабĕрĕн 5-мĕш тĕлне Тайуань тавралĕнчи Китай позицийĕсем патне çитнĕ. Хĕвелтухăç йенчен тапăнса пынă Йапони çарĕсем нойабĕрĕн 3-мĕшĕнче Таупане тытса илнĕ, нойабĕрĕн 5-мĕш тĕлне вара вĕсем Китай çарĕсен Тайуаньри ушкăнĕн тылне тухнă.

Çав условисенче Китайăн тĕп вăйĕсем Тайуаньа хăварса çав хуларан кăнтăр йенчи оборона вырăнне, Тайгу районне чакса кайнă. Анчах Тайуаньра хулана вĕсене çити хӳтлеме шут тытнă Китай чăçĕсем чылайăх пулнă. Йапонцăсен вĕсемпе ерне пахăн çапăçмала пулнă. Йапони çарĕсем хулана йăлтах хупăрласа илсе ăна чатма çук хытă бомбăланă. Хула сывăхĕнче тата унăн стенисем çинче икĕ кун ал вĕççĕн çапăçнă. Нойабĕрĕн 12-мĕш тĕлне тин Йапони чăçĕсем Тайуаньа тытса илнĕ.

Çурçĕр Китай фрончĕн ытти йенĕсенче йапонцăсем нойабĕрте ытлашши активлăн çапăçман.

Йапони çарĕсен вăйне йулашки вăхăтра Шанхай патĕнчи операцисем нумай тăкнă. Октябĕр пĕтнĕ тĕле, Йапонирен çĕнĕ чăçсем куçарса килнипе пула, Йапони çарĕсем Шанхайăн кĕр пайне йарса илсе Китай çарĕсене хулан кăнтăр йенчи пайне хĕсĕ кăларнă. Нойабĕр пуçламĕшĕнче Йапони командованийĕ, çурçĕр йенчен тапăнса пыракан чăçсемпе пĕрле кĕрешме, Шанхайран кăнтăр йенерех, Ханчжоу залив хĕрне вăйлă десант кăларнă. Çав десант Шанхай сывăхĕнче хăшпĕр пунктсене тытса илсе Китай оборони умне ăна йăлт çавăрса илес хăрушлăх кăларса тăратнă. Нойабĕрĕн 10-мĕш тĕлне Китай чăçĕсем Шанхайран майĕпе тухса кайнă. Сурçĕрне кăнтăр йенчен тапăнса пынă Йапони çарĕсем Хунуйао районĕнче пĕрлешнĕ. Китай çарĕсем Дйань кӳлли патне—Нанкин йеннеле пымали çула картласа тăракан Цинпу хули патне чакса кайнă.

Сучжоу хулишĕн кĕрешни Йапони çарĕсен Шанхай фронтĕнче операцисен тепĕр тапхăрĕ пулса тăнă. Йапони командованийĕ Шанхай фронтне çĕнĕ чăçсем кăларса вăйлатнă та вĕçĕ йенне тапăнса пынă: Йанчен кӳллин çурçĕр йенĕпе, Шанхайпа Нанкин хушшинчи чукунçул тăрăх тата кăнтăр йенчен Уцзйан çине. Çав операцине лунă кунă пахăн иртерне. Хăйĕн карапĕсем çинчи артиллерипе тата авиацийĕне усă курса, Йапони çарĕсем Сучжоу çинеле йерипен шуса пынă. Китай чăçĕсем Йапони çарĕсене чылай пĕтернĕ, анчах та Сучжоупа икĕ йенчен çавăрса илни унăн кун-çулне татса хунă: нойабĕрĕн 20-мĕшĕнче вăл йапонцăсен аллине куçнă.

Китай çарĕсем унтан вара Уси патне чакса кайса ăна нойабĕрĕн 25-мĕшĕнчен хӳтĕлесе тăнă. Йапони çарĕсем Тайху кӳлли урлă Уси патнĕ тухни тата вĕсем çурçĕр йенчен хĕсни Китай чăçĕсене Усийе хăварса Чанчжоу патне чакартарнă. Нойабĕр пĕтнĕ тĕле Китай çарĕсен фрончĕ Хочжоупа Чанжоу хушшине йышăнса тăнă.

Декабĕрте Йапони çарĕсем тĕп фронтра Нанкина тытса илес ĕмĕтпе наступлени пуçласа йанă. Йапони командованийĕ, хăйĕн умне хулана сыхласа тăракан Китай çарĕсене хупăрласа илес задачă лартса, Нанкина темиçе йенчен çапнă. Хăйĕн карапĕсене Йанцзы йуханывĕ тăрăх тăвала кайма ирĕк парас тесе, Йапони командованийĕ çав йуханывăн çурçĕр йенчен операци пуçласа йанă.

Декабĕрĕн 10-мĕш тĕлне Йапони çарĕн малти чăçĕсем Нанкина хупăрласа илнĕ. Çавăн хыççăнхи кунсенче йапонцăсем хула патне çарсем, йăвăр артиллери, çар карапĕсем илсе пынă. Нанкина хӳтĕлесе тăнă Китай çарĕн тĕп вăйĕсем кăнтăр йеннеле тата. Йанцзын çурçĕр йенне чакса кайнă: Йапонин Нанкина хӳтĕлесе тăракан Китай çарĕсене хупăрласа илес планĕ пурнăçа кĕреймен. Нанкин патне кăнтăр йенчен тапăнса пынă Йапони чăçĕсем декабĕрĕн 13-мĕшĕнче хулана çĕмĕрсе кĕнĕ.

Йапони çарĕсем Çурçĕр Китайра малала пыни, вĕсем Шанхайпа Нанкина тытса илни, вăл икĕ фронта та Йапони çарĕн вăйĕсемпе хатĕрĕсене нумай пухса тăратниччен килнĕ. Китай чăçĕсене çĕнтермеле тăвас тесе, Йапони çар командованийĕ мирлĕ вăхăтри дивизисен ытларах пайне çеç мар, запасри сене пухса тунă çĕнĕ дивизисене те материке куçарнă. Йапони военщинин карек те мĕнле хакла та пулин, çынсене темĕн чухлĕ пĕтерессин умĕнче чарăнса тăмасăр, йутçĕршыва тытса илес ĕмĕтне пурнăçа кĕртесшĕн. Йапони авиацийĕ пĕтĕмпе пекех — çĕр çинчи те, тинĕсри те—Китай çарне хирĕç çапăçать, Шанхайа хирĕç операцире Йапонин хăватлă флочĕ хăйĕн хăватлă артиллерине вăй парса тăнă.

Йут çĕршыва тытса илекенсене хирĕç пĕр кăмăлпа кĕрешме çунакан тата Йапони наступленине çирĕп отпор паракан Китай çарĕ йапонцăсене хирĕç вăрçăн пĕр пек техникăлă хатĕрĕсене тăратма пултараймасть. Анчах Йапони çарĕн Китайри анаçувĕ питех те иккĕле. Китайăн çапăçула чĕрĕ вăйне—Китай çарне—çĕмĕрсе такман. Вăл, хăйĕн çапăçу пултарулăхне усрасă тата кĕрешӳре пиçĕхсе, чакса пырать. Китай командованийĕ хăйĕн çарне ӳстерме тата вăйлатма çĕне кадрсем хатĕрлет. Йапони империалисĕсем пуçлана вăрçă Китай халăхĕн айларан та анлă сийĕсем хушшинче отпор парас хăватлă хум кăларчĕ: çĕршывра Йапонийе хирĕçле нацилле фронт туптанса пырать.

Йапони военщинин тытса илнĕ облăçĕсенче партизан пухăмĕ сарăлса пырать. Йапонцăсем тапăнса кĕнĕ Суйуань, Шаньси тата Хебей провинцисенче Китайăн уйрăм отрйачĕсем пулнă; çав отрйадсем вĕсен çумне Китайри монгол халăхĕсен доброволецисем хутшăннипе ӳссе пысăкланна, вĕсем Йапони тылĕпе коммуникацийĕ умне пысăк хăрушлăх кăларса тăратаççĕ. Йапони командованийĕн фронтра кана мар, тылра та çар тытса тăма лекет. Çурçĕр Китайăн чылай вырăнĕсенче Йапони çарĕсем, партизансене хирĕç кĕрешесси тататăх пырать. Йутçĕршыва тытса илекенсен хавар террорĕ вырăнти халăх хушшинче Йапоние хирĕçле йухăма çеç вăйлатать.

8-мĕш революцилле халăх çарĕн чăçĕсем Йапони тылĕнчи партизансен вак отрйачĕсене организацилекен вăй пулса тăчĕç. Çурçĕр Шаньсирен Китай стена районĕнче, çавăн пекех тата Бейпинпа Баодин районĕсенче партизанла йухăм анлăн сарăлса кайрĕ. Суйуань провинцинчи Гуйхуа районĕнче, çавăн пекех тата Танцзинпе Пукоу йенче Китай партизанĕсен вăйлă ушкăнĕсем кĕрешеççĕ. Партизан отрйачĕсем Йапони тылĕнче чукунçулсем çине тапăнаççĕ, броненоессене тата çар ешелонĕсене ӳпĕнтере-ӳпĕнтере йараççĕ. Октябĕр пĕтнĕ тĕле партизансем Баодин станци çине анăçулăн пырса тапăннă. Партизан отрйачĕсен йапонцăсен тылĕнчи хастарлăхĕ октябĕрпе нойабĕрте Йапони çарĕсем Тайуань çине тапăнса пырассине чакарнă тата Танцзинпе Пукоу йенне малала пырассине тытса чарнă.

Фронт чăсăлса кайни тата тыл çирĕп марри Йапони командованине материке çĕнĕ çар чăçĕсем куçарма хушаççĕ. Хаљхи вăхăт тĕлне Йапони çарне запасран мĕлйун çын ытларах, урахла каласан, 1904—1905 çулсенчи вăрçă вăхăтĕнче пĕтĕмпе илнĕ чухлех илнĕ. Халĕх те ĕнтĕ, вăрçă пуçланни пилĕк уйăх çине кайсанах, Йапонийăн йалхуçалăхĕ те, промышленнăçĕ те ал вăйĕ çитменнипе аптăраççĕ.

Вăрçă тăкакĕсем ӳссе пыраççĕ. Йапони правителстви официалла пĕлтернĕ тăрăх, сентабĕрпе октабĕрте вăрçăн кашни кунĕ Йапонийе 5 мĕлйун иен ларнă: 1904—1905 çулсенчи вăрçăра вăрçăн кашни кунĕ 3,6 мĕлйун иен ларна. Çар промышленнăçĕ валљи Йапонийе чĕртавар вăйлăн курсе тăна пирки промышленнăçăн ытти отраçлисем валљи чĕртавăр курĕсен питĕ нумай чакнă, вăл çав отраçлене чарăнса ларасси патне илсе пырат тата Йапони експортне хыта çапат. Промышленнăçăн вака тата вăтам предприйатийĕсем чĕртавар, ал вăйĕ çитмен пирки, хаксем ӳсĕ пирки папăхланса кайна. Нойабĕр пуçланнă тĕле Йапонире вăтам тата вака сутулу заведенийĕсем 20-рен 30 процент таран хупăннă.

Йапонире куллен кирлĕ таварсен хакĕсем ӳсĕсех пыраççĕ, рабочисен ĕç укçи хутшаңмаст. Выљăх-чĕрлĕхе çар валљи илсе кайна, ĕçлеме пултаракан арçынсене вăрçа хăваласа кайна пирки хресченсем тертленсе пурнаççĕ. Йапони палĕнче тара тӳлевне чакарма ыйтакан арендаторсем палханасси час-часах пулса пырат.

Пилĕк уйăх вăрçнă итогсем çапла ĕнтĕ. Йапони военщинине, „хăвăрт çĕнтерме“ шутланăскере, Китайа хирĕç вăрçă вăрăма чăсăласса халĕ йышăнма лекет.

Ӑмӑртӑва хутшӑнман ҫын пулмасӑ

Шупашкарти спирт заводӗнчи рабочисемпе инженерла-техникла работниксем тата служӑшчисем декабӗрӗн 20-мӗшӗнче хӑйсен пухуӗнче Мускав хулипе облаҫӗнчи стахановецсем чӗнсе каланине сӳтсе йаврӗҫ. Пухӑва пынӑ рабочисем, инженерсем, техниксем пурте чӗнсе каланине ырласа сталинла вунӑкунлӑха ҫӗнӗ ҫулчен тӑсса, суйлав умӗнхи сталинла вунӑкунлӑхра тунӑ ӳсӗмсене йаланлӑхах ҫирӗплетме пулаҫҫӗ.

„Суйлав умӗнхи сталинла вунӑкунлӑхра завод коллективӗ нумай ӳсӗмсем турӗ. Заводри бригадӑсем пӳрте вунӑкунлӑх планне иртерсе тултарчӗҫ. Пегайева йулташ йертсе пыракан бригадӑ 149 процент, Богданова бригади 146,8 процент, Васильева бригади 131,4 процент тултарнӑ. Уйрӑм стахановецсем: Васильев йулташ вунӑкунхи нормӑна 175 процент, Сивова 150 процент, Мохова 150 процент тултарнӑ.

Завод коллективӗ ҫӗнӗ ҫула ҫӗнӗ ӳсӗмсемпе кӗтсе илмешкӗн социалисӑмла ӑмӑртӑва тата стахановла йухӑма тата та анлӑн вӑйлатма пулса хӑйӗн умне: кашни рабочийе ӑмӑртӑва йавӑҫтарас задач лартнӑ. Пысӑк пахалӑхлӑ продукци кӑларма пулчӗ.

Рабочисем, инженерсем, техниксем виҫҫӗмӗш сталинла пйатилеткӑна ҫӗнтерӳлӗн кӗрсе пйатилеткӑн пӗрремӗш уйӑхне стахановла рекордсен сталинла уйӑхлӑхӗ тума йышӑнчӗҫ.

—★○☭—

Хамӑн ҫитӗнӳ ҫинчен

Епӗ кӑҫал, декабӗрӗн 9-мӗшӗнче хамӑн пӗр кунхи нормӑна 370 процент тултарса ҫӗнӗ ҫитӗнӳ турӑм. Анчах маншӑн ку ҫитӗнӳ виҫе мар. Мӗн-пур вӑйа хурса ӗҫлесен татах та ытларах тултарма пулаӑ.

Епӗ виҫӗ операцилӗ ӗҫре ӗҫлетӗп: сӗтел урисене йакататӑп, вӗсен вӗҫӗсене капитеԓ ҫапатӑп, винтӑсем касатӑп, тепӗр чухне винтӑсем каснӑ вырӑна урасем ҫыпӑҫтаратӑп. Пӑхса тӑракана ку ӗҫ ҫӑмӑл пек туйӑнаӑ. Хамшӑн та халӗ ҫавӑн пек. Анчах ӗҫлеме тытӑнсан алӑ ҫаврӑнмасӑ. Хамах илетӗп. Епӗ иртнӗ ҫулта фабрик-завод шкулӗнчен вӗренсе тухсан, ҫак ӗҫре тем пек вӑйа хурса ӗҫлесен те, нормӑна тултарма ҫукчӗ. Кашни кун 30—40 сӗтел уринчен ытла тӑвайман. Унтанпа шӑп ҫулталӑк иртрӗ. Нумай улшӑнтӑм епӗ. Техникӑна вӗренсе ҫитрӗм, ӗҫ йӗркине пӗлетӗп. Кӑҫал, декабӗрӗн 12-мӗшне Аслӑ Совет суйлав кунне хатӗрленнӗ май тата пысӑкрах ҫитӗнӳсем турӑм. Декабӗрӗн 7-мӗшӗнче—337 проц., 8-мӗшӗнче—365 проц., 9-мӗшӗнче—390 проц. тултарса ӗҫлерӗм.

Ҫитӗнӳ туни ҫакӑнтан килет: епӗ сменӑна йаланах гудок пуличчен кайатӑп. Ӗҫлеме пуҫличчен ӗҫ хатӗрӗсене, ӗҫ вырӑнӗсене тӗрӗслесе тухатӑп. Кирлӗ мар детаԓсене тасататӑп. Материалсем пирки ыйтса пӗлетӗп. Звонок пулсан тӳрех ӗҫлеме тытӑнатӑп. 420 минута пӗтӗмпех ӗҫленӗ ҫӗре йаратӑп.

Декабӗрӗн 9-мӗшӗнче те ҫаплах ӗҫленӗ. Ӗҫ хатӗрӗсене хатӗрлесе хунӑ, материалсем ҫителӗклӗ панӑ. Виҫӗ операцилӗ ӗҫре ӗҫлерӗм.

Епӗ ӗҫре Алексейевпа ӑмӑртса ӗҫлетӗп. Вӑл та манран йулсах ӗҫлемест, кулленхи нормӑна 250—300 проц. тултараӑ.

Сталинла виҫҫӗмӗш пйатилеткӑн пӗрремӗш ҫулне татах та ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем тунипе кӗтсе илес тесе, хам ҫине тата ҫӗнӗ рекорд тума обйазателствӑ илетӗп. Материалсем вӑхӑтра парсан нормӑна 400 проц. ытла тултарма пулатӑп.

Мускав хулипе облаҫӗнчи предприйатисенче ӗҫлекенсем чӗнсе каланине ырӑ кӑмӑлпах йышӑнатӑп.

Ҫӗмӗрле комбинатӗнчи стоԓарнӑй цехра ӗҫлекен стахановец

П. Семенов.

—○—

Стахановла ӗҫлеме чӑрмантараҫҫӗ

Ленин йачӗпе тӑракан промертелӗн стружкӑ тӑвакан заводри рабочисем (Турхан р.) Аслӑ Совета суйламалли куна хатӗрленнӗ май, Нойабӗрӗн 20-мӗшпе декабӗрӗн 10-мӗш хушшинче стахановла рекордсен сталинла ҫирӗмкунлӑхӗ ирттерме йышӑннӑччӗ. Анчах завод дирекцийӗ начар ӗҫленипе ҫирӗмкунлӑх ӑнӑҫулӑн иртереймерӗ.

Заводра пӗтӗмпе 8 станок. Малтанхи вӑхӑтрах вӗсем пурте ӗҫленӗ пулнӑ. Халӗ чӗнсем ҫук пирки станоксем ахаԓ лараҫҫӗ. Акӑ нойабӗрӗн 8-мӗшӗнче пӗр станок ҫеҫ ӗҫленӗ. Хӑма ҫуракан цехра та виҫӗ пӑчкӑран, иккӗшӗ ӗҫлемен.

Пӗтӗм ҫитменлӗх кунта дирекцине тивет. Завод дирекцийӗ сӑмахпа ҫеҫ рабочисене ӗҫлеме условисем туса параӑ. Шупашкарта та пулчӗ вӑл, анчах пулнӑ чӗнсене илсе пымарӗ.

Станоксем ӗҫлемен пирки рабочисем вӑхӑта ахалех ирттереҫҫӗ. Акӑ нойабӗр уйӑхӗнче 4 станок кашни куллен 110 кип стружкӑ туса кӑларнӑ пулсан, декабӗрте 50 кип ҫеҫ туса кӑлараҫҫӗ.

Заводра ҫитменлӗхсем татах та пур. Аппаратра шанчӑксӑр ҫынсем ӗҫлеҫҫӗ. Аслӑ бухгалтер И. Максимов—7 пин тенкӗ, снабжени начаԓникӗ И. Маԓакшин—32 пин тен., буфетчик А. Йарҫуков—12 пин тенкӗ растратӑ тунӑ.

Рабочисем стахановла ӗҫлесшӗн. Хӑҫан вӗсене услови туса параҫҫӗ-ши?

И. М.

—○—

Литературӑ кружокӗ

Шупашкарти педагогикӑ рабфакӗнче мӗн вӗренӳ ҫулӗ пуҫланнӑранпах литературӑ кружокӗ ӗҫлет. Студентсем литературӑпа хыта интересленеҫҫӗ, кружок заԣатийӗсене пӗр сиктермесӗр ҫӳреҫҫӗ. Литкружок йатарласа стена хаҫачӗ кӑларса тӑраӑ, унта ҫырма пуҫлакан ҫамрӑк поетсен сӑввисене пичетлеҫҫӗ.

Ҫитес кунсенче литкружок членӗсем хӑйсен пултарулӑхне вечер туса кӑтартса пама хатӗрленеҫҫӗ.

П. Синичкин.

Ст. Йуханка

Тӑван ҫӗршывӑн тивӗҫлӗ ывӑлӗ

(Н. Островский вилни ҫулталӑк тултарнӑ майӗпе)

Ҫуркунне. Хула тулашӗ. Лапкӑ та хурлӑ. Вӑрман кашт чаштартатаӑ. Уйӑха н чирлесе выртнӑ хыҫҫӑн терексер ем ҫине тӑна Павал Корчагин типӗм те шурка. Вӑл кӗрешӳре вилнӗ йулташӗсене пытарнӑ ҫава ҫинӗ пынӑ.

Павал картусне йерипен пуҫ ҫинчен илчӗ. Ун чӗри пысӑк кичемпе тулчӗ. Ку выранта унӑн йулташӗсем выртаҫҫӗ. Патарла вилӗм. Кӗлмӗҫлӗхре ҫуралнисемшӗн, ҫуралнийех чуралӑх пуҫламӗшӗ пулнисемшӗн пурнӑҫ лайӑх та илемлӗ пултӑр тесе вилнӗ йулташӗсем...

„Етемӗн чи хаклӑ вӑл—пурнӑҫ,—тесе шутлаӑ Корчагин.—Ана етеме пӗр хут ҫеҫ панӑ. Ҫавӑнпа та теллевсӗр пурнӑҫа иртерие ҫулсемшӗн кайран чӗре ыратмала ан пултӑр, ирсӗррӗн, ваккан-тӗвеккен пуранса иртернӗшӗн намӑс хӗмлентермеле ан пултӑр тесе пурӑнмала; вилнӗ чух калама пултартӑр етем: пӗтӗм пурнӑҫӑма, пӗтӗм вӑй-халӑма тӗнчери чи хитрелӗ ӗҫе—етем йӑхне ирӗке кӑларас кӗрешӗве патӑм. Пурӑнма васкас пулаӑ".

Н. Островскин „Хурҫӑ йепле хӗрнӗ" романне пӗр хут та пулин вуланӑ ҫын Павал Корчагинӑн ҫак сӑмахӗсене нихӑҫан та манас ҫук. Вӑл йӗркесем асран каймаҫҫӗ, мӗншӗн тесен вӗсене чӗререн ҫырнӑ, вӗсене пӗтӗм пурнӑҫне, ҫамрӑклӑхӑн нихӑҫан сӳнми хастарлӑхне, тулли вӑйхалне револҽуцине панӑ ҫын, револҽуцишӗн кӗрешнӗ ҫӗрте нихӑҫан та, ниҫта та пӗр утӑм та кайала чакман, йӑвӑрлӑхсем, хӗн-хурсем, выҫлӑх урлӑ каҫса малала та малала ҫеҫ пынӑ ҫын ҫырнӑ. Ҫак сӑмахсене ҫыракан ҫын хӑй кӗрешӳре малта пыракансен ретӗнче пулнӑ, вӑл хӑй кӗрешӳре хӗлхемленнӗ, кайала чакма тивсен хурланнӑ, ҫӗнтерӳсемшӗн пӗтӗм халӑхпа пӗрле савӑннӑ. Ҫавӑнпа Островский кӗнекисем пурнӑҫа тӗрӗс кӑтартса пыраҫҫӗ, ҫавӑнпа вӑл кӗнекесем хумхатаҫҫӗ, пире ҫӗнерен те ҫӗнӗ кӗрешӗве чӗнеҫҫӗ.

Островский Октабӗр револҽуцийӗнчех пурнӑҫа курнӑ ҫын. 1917-мӗш ҫулта вӑл вунвиҫҫӗре пулнӑ. Анчах ҫав тери ҫамрӑк пулин те, ике ҫул хушши тӑра кӗрешсе ӗҫлеме елкӗрнӗ. Ҫамрӑк пулнӑ пулин те Островский чуралӑх сӑнчӑрне туртса ҫыхакансене куҫ кӗретӗнех курнӑ. Курнӑ ҫеҫ те мар, пулас писател хӑйпе тантӑшла ҫамрӑксемпе пӗрле ачаллах пусмӑрайне кӗрсе ӳкне, ача чухнехи вӑхӑтсене савӑнаҫлӑн иртерес вырӑнне пӗр татӑк ҫӑкӑршӗн иртен пуҫласа ҫӗрлеччен ӗҫлене. Ҫавӑнта хуҫасене, ҫын вӑйӗпе пуранакансене кураймасӑр пуранна, вӑл курайманлӑха темиҫе ҫул хушши чӗрере туптаса ҫӳренӗ.

Писател хӑйӗн ача чухнехи пурнӑҫӗн пӗр кӗске сыпӑкне илсе ҫапла каласа кӑтартаӑ:

„...Епӗ ун чухне вуниккӗречӗ... Арапаран тупса пӗр кӗнеке—Французсен буржуалла ҫыравҫӗн романне илсе килтӗм. Вӑл кӗнекере, ӑна питӗ лайӑх астӑватӑп, путсӗр граф ӗҫсӗр аптӑрана майӗпе хӑйӗн лакейӗнчен мӑшкӑланине; мӗн май пур таранах ирсӗрленнине кӑтартнӑ: пӗринче вӑл хӑйӗн лакейне кӗтмен ҫӗртен сӑмсинчен шакканӑ, лешӗн хӑранипе чӗркуҫҫийӗсем хутланнӑ.

Ҫаксем ҫинчен епӗ хамӑн ват аннеме вуласа кӑтартрӑм, ӑшчик ҫав тери тӑвӑнса ҫитрӗ. Граф хӑйӗн лакейне сӑмсаран шакканипе лакейӗ подноса ҫӗре ӳкерни патне ҫитрӗм те,—лакей хӑйне ним выранне хумасӑр кулкаласа кайнашӑн тарахса хӑм пӗлнӗ пек варҫма пуҫларӑм.

Йӑнах та ӗнтӗ, французсен йап-йака пуплевӗсем ҫава патнех сирпӗнчӗҫ—кӗнеке рабочи челхине каласма тытанчӗ. „Вара лакей граф йеннеле ҫаврӑнче те, ӑна самсаран пӗр-рех йантратса йаче. Пӗр хут ҫеҫ мар, ик хут, граф куҫпуҫӗнчен вут тухса карӗ...". „Тахта-ха, тахта!—терӗ аннӗ.—Графсене пит-куҫран ҫапнине аҫта курнӑ!?" Пит-куҫ вӗриленсе карӗ ман. „Ҫава кирлӗ ӑна ылханла ирсӗре! Ӗҫлекен ҫынна ан ҫаптӑр вӑл!" —тетӗп. „Ниҫта та пулман ун пек йапала! Енен-местӗн! Кӳр-ха кӗнекине!—тет аннӗ.—Унта ун пекки ҫук." Еп тарахса ҫитнипе кӗнекене урайне ҫӗклесе ҫапатӑп та кашкӑратӑп. „Ҫук пулсан—йапах йапала вара. Еп унӑнне, йурамисӗрскерӗнне, пӗтӗм айак пӗрчийӗсене хуҫса пӗтереттӗм".

15 ҫулхи Николай Островский комсомол ретӗнче. Украинӑ ҫӗршывӗ Германи ҫарӗнчен тасалсанах вӑл фронта тухса кайаӑ. Урӑхла пулма та пултарайман, мӗншӗн тесен Островский Российӑри хӗрлӗ йалав ҫӗкленӗ ӗҫҫыннисем мӗншӗн кӗрешнине, интервентсен тара кӗрешне ҫарӗсем ҫамрӑк республикӑна карланкӑран тытма кӑмашнийе витер курса тӑнӑ. Ҫавӑнпа вӑл Котовскипе Буденный ҫарӗсенче паттарла кӗрешет, йӑвӑр аманаӑ.

1922 ҫулта хулана вута туртарса пыма пысӑк хавартлӑхпа чукунҫул таваҫҫӗ. Ҫанталӑк сивӗ. Тумтирсем начар. Апатсимӗс ҫителексӗр. Островский сивве те, выҫлӑха та тӳсет. Кайарахпа тифпа чирлесе ӳкет.

Ырми-канми ӗҫлесси—Островский пӗтӗм пурнӑҫӗн ӑш-чике пулнӑ. Вӑл пӗр тытӑнна ӗҫе нихӑҫан та аларан парахман. Ахаԓтен мар, чир пирки ӗҫлейми пулсан вӑл пуринчен ытла хӑй тулли хаклӑ етемсен ретӗнчен тухрӑм тесе куԓанаӑ.

1924 ҫулта 20 ҫулхи Николай Островский болԓшевиксен парти ретне кӗрет. Партире вӑл хушнӑ ӗҫсене пурне те вӑхатра, тимлӗн туса пыраӑ. 1927 ҫул хыҫҫӑн та, чирлӗскер, йӑвӑр кӗрешӳ ҫулӗсем чӑлахланӑскер, ӗҫлеме чарӑнмасӑ. Анчах чир хӗрхенмесӗр чӑрсӑррӑн тыткалаӑ ӑна. Кӗҫ Островский куҫсӑр пулаӑ.

„Чир-чӗр стройран кӑларче мана. Еп сирӗн хушӑмӑрта пулайми пултӑм, ҫӳрейми пултӑм, куҫ курми пулчӗ. Пурӑнас ман умма ҫӗнӗ хӗҫпӑшала, мана пӗтӗм фронӗпе ҫӗнтерсе пыракан пролетариат ӗретне кӗртекен хӗҫпӑшала алла илес задача лартре. Ҫырасса куҫ курмасан та, вырантан хускалмасан та ҫырма пулаӑ",— тет Островский.

Вӑл кунӗн-ҫӗрӗн ӗҫлет: вулаӑ, ҫыраӑ. Унӑн мӗн пур телейӗ ӗҫре, ҫырулӑхра. Вӑл сывлӑх телӗшпе мӗн ҫухатма пултарнине пӗтӗмпех ҫухатнӑскер, мӗнпе те пулин партине, ҫӗршыва усӑлла ҫын пулассшӑн. Телей нумай йӗнлӗ. Островский тем терийех телейлӗ. Вӑл хӑйӗн аллипе социалисӑм йатла чаплӑ та илемлӗ ҫурта тунӑ ҫӗрте кирпӗч хунӑшӑн савӑнаӑ. Савӑнма тивӗҫлӗх те пур.

Николай Островский ҫырнӑ ике кӗнеке: „Хурҫӑ йепле хӗрнӗ" романпа „Тӑвӑл ҫуратнисем" роман совет ҫӗршывӗнчи вулаканӑн чи йуратакан кӗнекисем пулса тӑчӗҫ.

Ҫулталӑк кайарах, декабӗрӗн 22-мӗшӗнче 32 ҫулхи Н. Островский вӑхӑтсӑр вилчӗ: пирӗн тӑван ҫӗршыв, парти хӑйӗн паттӑр ывӑлне, пурнӑҫа тӗрӗссӗн сӑнласа паракан писателне ҫухатрӗ. Островский хӑй те пирӗн илемлӗ, ҫамрӑк, вӑй-халлӑ, ҫирӗп ҫӗршыва чӗререн йуратнӑ, вӑл хӑй ҫак ҫӗршывра телейлӗ пурнӑҫ тӑвас тесе ӑна тӑшмансенчен хӳтӗленӗ, ҫӗршыв ун куҫӗ умӗнче ӳссе ҫирӗпленнӗ, савӑнӑҫла пурӑнаҫ тунӑ. Ахаԓтен мар вӑл „кашни ҫамракӑнах паттӑр кӗрешекен пулмала, мӗншӗн тесен рабочи класӑн, партин шанчӑклӑ ывӑлӗ пулниничен ытла нийепле телей те ҫук", тесе ҫыраӑ.

Халӗ Павал Корчагин сӑмахӗсене „Хурҫӑ йепле хӗрнӗ" кӗнекене ҫыраканӗ пирки калама пулаӑ: вӑл пӗтӗм пурнӑҫне, пӗтӗм вӑй-халне етем йӑхне ирӗке кӑларас кӗрешӗве пачӗ.

Ҫамрӑк сӑвӑҫсем пирки

„Социалисӑмшӑн" хаҫат (Канаш) хӑйӗн кулленхи ӗҫӗнче ҫамрӑк сӑвӑҫсене хутшантарса пыма тӑрашаӑ. Унӑн страницисем ҫинче типтерех ҫырма пуҫланӑ С. Йарадай, В. Николайев, И. Малов тата ыттисен сӑввисем час-часах пичетленсе тухаҫҫӗ. Хаҫат редакцин кадрсем ҫитӗнтерес ӗмӗтне ырламала, анчах вӑл ку ӗҫе тимсӗр, типтерсӗр, ҫийелтен туса пыраӑ. Редакци сӑвӑсенчен мӗн алла лекнӗ,—пӳрне те пичетлет.

Декабӗрӗн 10-мӗшӗнче тухнӑ номӗрте И. Малов хӑйӗн „Пурнӑҫ аслӑ" сӑввинче: „ҫын пӗлман пуш-хир ак халӗ ӳстерет корпуссем, тимӗр аваӑ ӗҫсыи алӗ хаԓ ПИРТЕ ҪӖР. ЙУНӖСЕМ". „Пурнӑҫ аслӑ—САР ЧЕЧЕК...", „Аслӑ хир мотор туйанна, трактор ШАВЛАСА ИШЕТ", „Ԓотчиксем ӗҫе ВЕҪЛЕҪҪӖ...", „Автобусӗсем чупаҫҫӗ, шӑхӑраҫҫӗ шик те шик (!), тесе ҫыраӑ. Анчах редакци те, автор та трактор ишме пултарайманнине, автобус шӑхӑрманнине пӗлмесӗр тӑма-пултараймаҫҫӗ. Тракторсем ишнӗрен, автобуссем шӑхӑрнӑран ӗнтӗ:

„Йепле-ха пулма ес танлӑ
Йепле хӑйӑн ҫак ӗҫре..." тесе

лапӑртатакан сӑмахсем тухаҫҫӗ хаҫатра.

Халӑх творчествипе, халӑх йуррисемпе уса курасси литераторсем хушшинче йулашки вӑхӑтра хӑйне май „модӑ" пулса кайрӗ.

„Социалисӑмшӑн" хаҫатӑн ҫав номӗрӗнчех С. Йарадай:

„Чечен чечек пахчинче
Писсе ҫитнӗ ҫырла пур.
Аслӑ Совет ҫӗрӗнче
Чаплӑ Конституци пур" тесе

ҫыраӑ. Кунта Сталинла аслӑ Конституцине ҫырлапа танаштарни пачах вырӑнсӑр, ҫемҫен каласан, вӑл—йанаш.

„Социалисӑмшӑн" хаҫатра пичетленсе пыракан сӑвӑсенчен нумайӗшӗ типтерсӗрлӗхпе палӑрса тӑраҫҫӗ. Сӑвӑҫсем хӑйсен сӑввисене ҫырса пӗтерсен чӗрнил типиччен редакцине илсе пыраҫҫӗ пулмала. Редакци те хӑй йенчен сӑвӑсен пахалӑхӗ ҫинчен ҫине тӑрса ӗҫлемест.

Декабӗрӗн 12-мӗшӗнче тухнӑ номӗрте Аслӑ суйлав кунне „пахаласа" С. Йарадай хӑйӗн сӑввине: „ҫӗршыва ТУЛСА ЛАРЧӖ илемлӗх... хӗвел пек КУЛСА ЙАЧӖ ЕТЕМЛӖХ" текен илемсӗр те кӑнттам сӑмахсемпе ҫырнӑ.

Хаҫат чӗлхинче, уйрӑмах — поези произведенийӗнче, елементарлӑ хут пӗлни те кирлӗ.

Ҫакӑн пек пулса ҫитмен сӑвӑсене пичетлесе, редакци усӑ мар, сийен ҫеҫ кӳме пултараӑ. Пуринчен малтан ку практика авторсемшӗн сийенлӗ. Редакци алла ӳсса ӗҫленине курӑ, хӑшпӗр ҫамрӑк авторсем хӑйсем аста тӑвине манса кайаҫҫӗ, боге мӑ сӗрӗмепе антрама тытӑнаҫҫӗ.

Тимлӗрех пулни, тӑрӑшарах ӗҫлени кирлӗ.

—◆★◆—

Кӗҫӗн Маԣлашкинӑри колхоз хорӗн концерчӗсем

Кӗҫӗн Маклашкинӑри (Сӗнтӗрвӑрри р.) А. Н. Тогайев йулташ йертсе пыракан колхоз хорӗн пултарулӑхӗ ӳснӗ ҫемӗн ӳссе пыраӑ. Колхозниксем унӑн выступленийӗсене питӗ ӑшӑ кӑмӑлпа йышӑнаҫҫӗ.

Хор Совет Сойузӗн Аслӑ Советне суйланӑ кун тата суйлавра коммуниссемпе партире тӑманнисен блокӗ ҫӗнтернӗ йатпа Кӗҫӗн Маклашкинӑ йалсоветне кӗрекен йалсенче виҫӗ концерт панӑ. Вӗсемсӗр пуҫне, Сӗнтӗрвӑрринчи Судоверф ҫумӗнчи хӗрарӑмсен хорӗпе пӗрле спирт заводӗнче, Сӗнтӗрвӑрри хулинче 5 концерт иртернӗ.

Хорсен репертуарӗнче суйлав ҫинчен хунӑ йурӑсем тата ытти ҫӗнӗ йурӑсем те пур: „Сталинла саккун", „Мухтава тивӗҫлисем", „Декабӗрӗн 12-мӗшӗ", „Савӑнӑҫ маршӗ", „Ҫамрӑклӑх йурри", Лебедев композиторӑн „Сталин ҫинчен хунӑ йурӑ" т. ыт. те.

Халӗ Кӗҫӗн Маклашкинӑ колхозӗн хорӗ ҫӗнӗ ҫул, виҫҫӗмӗш пйатилеткӑн пӗрремӗш ҫулӗ пуҫланнӑ йатпа концертсем пама хатӗрленет. Чӑваш радиокомитечӗ ыйтнипе ҫӗнӗ ҫул каҫхине радио тӑрӑх тухса йурлаӑ.

—★○☭—

Колхозри строителствӑ

ИЕТӖРНЕ. Пушнарти Мичурин йачӗпе тӑракан колхозра ҫак кунсенче ҫӗнӗрӗн тырӑ склачӗ туса лартрӗҫ. 4-мӗш бригадӑра ҫак кунсенчех 30 лаша вырнаҫмалӑх ҫӗнӗ вите тата коԣухсем ваԓԓи пӳрт турӗҫ. Хаԓ коԣухсем ҫӗнӗ пӳртре пурӑнаҫҫӗ, вӗсене ваԓԓи колхоз хаҫатсем ҫыранса илчӗ.

А. Соловйов.

Николай Островский

Халӑх тӑшманӗсем тата вӗсене пулӑшакансем

ПАТӐРЙЕЛ („Чӑваш Коммуне" корр.). Государствӑ колхозниксемпе йединоличник хуҫалӑхӗсене налогсен недоимкисене тӳлессинчен хӑтарса ԓготӑсем пачӗ. Ҫакна Йатӑрйел райӗҫтавкомӗ колхозниксемпе йединоличниксем умне вуҫех тепӗр майла, тӳнтерле каларса тӑратнӑ. Районра 1936 ҫулта недоимка йалхуҫалӑх налогӗ йенӗпе 35 пин тенкӗ, самообложени укҫи 25 пин тенкӗ шутланса тӑнӑ. Государствӑ ԓготӑсем недоимка шутланса тӑракан хуҫалӑхсене ҫеҫ панӑ. Анчах районри финанс пайӗн пуҫлӑхӗ Александров тата райӗҫтавком председателӗ Степанов ҫав йӗркене пӗлетӑркачах, налогсене парса татнӑ колхозниксемпе йединоличник хуҫалӑхӗсене те „ԓготӑсем" панӑ. Йалхуҫалӑх налогӗ 94 пин тенкӗ, самообложени укҫине 37 пин тенкӗ недоимкӑ пур тесе кӑтартса суйа ԓготӑсем илнӗ. Вара ԓготӑсем недоимкӑра йулнӑ хуҫалӑхсене ҫеҫ мар, налогсене тӳлесе татнӑ хуҫалӑхсене те панӑ. Ҫапла вара вӗсем 71 пин тенкӗ государствӑран кайала илмеле тунӑ.

Ҫака сӑтӑрла ӗҫ халӗ 1937 ҫулхи укҫатенкӗ пухас ӗҫе ытла та хытӑ чӑрмантараӑ. Декабӗрӗн 1-мӗшӗ тӗлне те 4-мӗш кварталӑ планне 40 процент ҫеҫ тултарнӑ.

Апла пулсан та, саккуна паснӑ йӑнӑшсене тӳрлетӗс тӗлӗшпе колхозниксемпе йединоличниксене анлантарса парса, массӑна финанс планне вӑхӑтра тултарма мобилизацилес тӗлӗшпе нимӗн те тумаҫҫӗ.

Районри бюджет пӗрмайах пурнӑҫланмасӑр пынӑ. 1937 ҫулта расхут йенӗпе 2.512 пин тенкӗ пахнӑ, ҫакна нойабӗрӗн 1-мӗшӗ тӗлне 83 процент пурнӑҫлас вырӑнне, 73 процент кӑна вырӑна кӗртнӗ. Пуринчен ытларах халӑха ҫутта кӑларас, халӑх сывлӑхне сыхлас ӗҫе йама парӑтна укҫа-тенкӗпе уса курмаҫҫӗ. Пуҫламӑш шкулсем йенӗпе 42 процент, вӑтам шкулсем йенӗпе 50 процент кӑна вырӑна кӗнӗ, шкулсенчи чи кирлӗ ӗҫсене туман. Ҫав хушӑрах райӗҫтавком вырӑнсӑр расходсем туса пынӑ.

Финанс секцийӗсен ӗҫӗсем районра пачах пӗтсе ларнӑ, вӗсене йертсе пыракан ҫук.

Райӗҫтавком председателӗ Степанов халӑх тӑшманӗсене хӳтӗленӗ, вӗсен ӗҫӗсене туса пынӑ. Районри ҫӗрӗҫ пайӗн пуҫлӑхӗ Ивановпа агроном Михайлов колхоз демократине паснӑ. Колхозсенче нумай пусӑла пусуҫаврӑнӑшне йӗркелес ӗҫре, колхозниксене хӑйсене сӳтсе-йавма ирӗк паман. Выранти условисене шута илмесӗр, ҫултен ирӗксӗрлесе йурахсӑр пусуҫаврӑнӑшӗ тунӑ. Улӑхсем, выԓӑх сӗретмели вырӑнсем ҫителӗклӗ пур колхозсене тата тештыра акассине чакарсах, курӑк акмали пусуҫаврӑнӑшӗ (7 пусӑлӑ, клеварпа) туса панӑ. Ҫав вӑхӑтрах ҫарансӑр, выԓӑх сӗретмели вырӑнсем ҫук колхозсенче, пилӗк пусӑла, курӑк акмасӑр, пусуҫаврӑнӑшӗ тунӑ. Ҫакӑн пек пусуҫаврӑнӑшӗ вӑл—тырпул тухӑҫлӑхне чакарса тата выԓӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫе чӑрмантарса пынӑ.

Ҫӗрӗҫ пайӗн агрономӗ Михайлов Патӑрйел районӗнчи „Ленин ҫулӗпе", „Хӗрлӗ Туҫа", „Куԓтурӑ" тата Шмидт йачӗпе тӑракан колхозсене 1935 ҫултан пуҫласа тӑвата пусӑлӑ, ԓуцерна акмала пусу ҫаврӑнӑшӗ ҫине куҫарнӑ. Ку майпа тештыра акмали шут нумай чакнӑ. Ҫавнашкалах, суртла варлӑхсем акса тӑвас ӗҫсене аркатса тата сӳртла варлӑхсене тасамарлантарса пынӑ.

Халӑх тӑшманӗсем выԓӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫе сатарлана. Колхоз фермисене темиҫе тӗрлӗ аратла выԓӑхсем йарса патраштарнӑ. Районри ҫӗрӗҫ пайӗн пуҫлӑхӗ Ивановпа хатӗрлевсен Комитечӗн уполномоченнайӗ пулса „ӗҫленӗ" халӑх тӑшманӗ Ҫмеԓски колхозсене ҫултан ҫулах ӗҫе кӗмеле мар выԓӑх-чӗрлӗх ӗрчетмели пламсем панӑ. Ҫав пламсем ҫинчи цыфрсене пӑхса государствӑна ашкакай тӑратмали пламсем панӑ. 1937 ҫулта ҫук выԓӑхсемшӗнех колхозсене 302 центнер аш-какай хурса панӑ. Ҫӗрӗҫ пайӗн планӗ тӑрӑх „Восток" колхозӑн аратсӑр пилӗк сысна аминчен 100 сыснана ҫитермеле. Колхоз 15 пуҫа ҫеҫ ҫитернӗ. Ҫмеԓски планӗпе „Восток" колхозӑн 30 центнер аш-какай памала. Ҫапла вара ҫук сыснасем ҫине 23,4 центнер аш-какай тивет. Ҫавнашкалах „Куԓтурӑ" колхоза ҫук сысnасемшӗн 23,4 центнер. Молотов йачӗпе тӑракан колхоза 4 сысна аминчен 90 пуҫ сысна ҫитентерме план парса, вӑл шутран 27,4 центнер аш-какай тӑратма обйазателҫтва панӑ.

Ҫак сӑтӑрла пламсем райӗҫтавком президиумӗнче ҫирӗпленсе тухнӑ. Райӗҫтавком председателӗ Степанов совета хирӗҫле докуметсене пӗлетӑркачах саккуна кӗртсе йанӑ. Вӑл райӗҫтавком аппаратне тӑшмансене ларта-ларта тухнӑ. Ступин кулака, нимӗн те пӗлменскернех, райӗҫтавкомӑн техникӗ туса хураӑ. Ҫулйӗр пайӗн пуҫлӑхӗ Тибайкин халӑх укҫине 1229 тенкӗ салатаӑ.

Районри тимсӗр руководствӑна пула тӑшманла етемсем колхозсенче ӗҫле вырӑнсене кӗрсе ларса, сӑтарлӑ ӗҫсем туса пынӑ. Аслӑ Каҫалри „Болԓшевик" колхозра кулаксемпе йышенӑсем, 1921 ҫулта кулаксен восстанийӗнче пулнӑскерсем тата чирку ҫыннисем „йертҫе" пынӑ. Колхозӑн ударӗнче помещик тата земски начаԓник пулнӑскер П. Йеԓпов, шурӑгварди офицерӗ Г. Дмитрийев, архийерей Тимофей вырнаҫса пурӑнна. Ҫак тӑшмансем пӗр ҫул хушшинче колхозра темиҫе пушар кӑларнӑ, тырпулсене сӗртнӗ, выԓӑх-чӗрлӗхе велернӗ, машинӑсене ватнӑ, колхозӑн укҫа-тенкине салатнӑ. Пӗр 1936 ҫулта кӑна колхоз 77 пин тенкӗлӗх сийен тӳснӗ. Ҫак ӗҫсем колхозри парторганизацийӗн куҫӗ умӗнчех пулса пынӑ. Ку колхозра райком секретарӗ Чернов тата райком секретарӗ пулнӑскер Цветков та сахал мар пулнӑ. Райком секретарӗ Чернов йултӑш парти документӗсене улӑштарнӑ чухне совета хирӗҫле етеме—Никитина парти билечӗ панӑ. Парти билечӗ улӑштарнӑ хыҫҫӑн ҫав Никитина „Хӗрлӗ Сормово" колхозӑн председателӗ пулма сӗннӗ. Никитин „Хӗрлӗ Сормово" колхозра сӑтӑрла ӗҫсем тӑваӑ. Ку сахал, вӑл хӑйӗн арӑмне Никитинӑна ферма пуҫлӑхне ларӑаӑ те 16 пӑру вӗлерттерет. Анчах ҫаксем иккӗшӗ те коммуниссем пулнӑ. Халӗ Никитинӑна партирен кӑларнипех айӑпне каҫарса хӑварасшӑн.

Райком секретарӗ пулнӑ Цветков Йанкасинчи Буденный йачӗпе хиселленекен колхоз председателне темиҫе хут судпа айӑпланнӑ Чумакова ирӗксӗрлесех суйлатарса хӑвараӑ. Лешӗ хӑйне председателе лартнӑ кунах колхозниксене хӗнесе тӑкаӑ. Колхоз ферминче красновҫем сӑтӑрла ӗҫсем туса пыраҫҫӗ; сысна сене сутаҫҫӗ, вӑрлаҫҫӗ.

Цветкова, 1934 ҫулта, Елӗк райкомӗн секретарӗн заместителӗ пулса ӗҫленӗ чух, клас тӑшманӗсен ирсӗр ӗҫӗсене тара шыв ҫине кӑларакана стена хаҫатне аресленешӗн вырӑнтан кӑларса парти йенӗпе хытӑ йатлана. 1935 ҫулта халӑх тӑшманӗ Йефимовпа тата Ирнтковпа ӗҫсе усӗрӗлсе студентсене пӑшалпа персе хӑратса пӗтернӗ. Цветков 1936 ҫулта „Октабӗр йалавӗ" хаҫатӑн редакторӗшӗн ӗҫленӗ чухне хаҫатра пӗрмайах контрреволԓуцилле сава-калавсем кӗртсе пынӑ, хаҫата клас тӑшманӗсен трибунӗ туса хунӑ. Цветков халӑх тӑшманӗ Арӑнделйкинпа ҫыхӑну тытса пурӑннӑ. Цветковӑн ирсӗр те тӑшманла ӗҫӗсене шута илсе, ӑна парти райкомӗ ҫумӗнчи парти организацинче партирен те кӑларнӑ. Анчах парти райкомӗн секретарӗ Чернов йултӑш, коммуниссен сигналӗсене илтмесӗр, Цветкова хӳтӗлесе парти ретӗнчех хӑвараӑ, йатӑм шкул директорӗ туса хураӑ.

Ҫак ӗҫсем вӗсем парти райкомӗ сисеймелӗхе ҫухатнипе пулса пыраҫҫӗ. Ку ҫеҫ те мар, Иванов сатарҫа пӗр айапсӑрах, ситменнине райкомран лайӑх характеристика илсе тухса карӗ. Иритков халӑх тӑшманӗ—Патӑрйелӗнчен партирен тухса ӳкнипех хӑтӑлса тухса шӑванчӗ. Хаԓхи директор вырӑнӗнче Соколов коммунис педучилишчӗри тӑшмансен йулашкийӗсене ике аллипех витсе тӑрсан та, пӗр айапсӑрах пурӑнаӑ. Ҫавнашкалах Ҫмеԓски те, парти билетне лайӑх пуҫтарса чиксе, Патӑрйелсемпе алӑ тытса сывпуллашса тухса вӗстерет. Ҫака ӗнтӗ, парти райкомӗ тата унӑн секретарӗ Чернов халӑх тӑшманӗсене хӳтӗлени пулаӑ.

Пире йулашки кунсенче пулса иртнӗ фактсем те ытларах тӗлӗнтереҫҫӗ. Райӗҫтавкомри сӑтӑрла ӗҫсем ҫинчен районри хаҫатра ҫырнӑ. Анчах, ҫав статйасене сӳтсе-йавма пуханнӑ Киве Ахпурт йалӗнчи колхозниксен пухӑвне райком секретарӗ Чернов йултӑш салатса йама хушнӑ. Райкомӑн иккӗмӗш секретарӗ Антонов йултӑш районри колхозсемпе йалсене хуҫалӑхла-политикӑлла ӗҫсемпе йама пухнӑ районри ҫынсене „вӑл материалсене халӗ сӳтсе-йавмасан та йураӑ" тесе каланӑ.

Ку ӗнтӗ райком секретарӗсем болԓшевикла самокритикӑна хӗснӗ пулаӑ.

Парти райкомӗн руководстви—болԓшевикла ҫирӗп, халӑх тӑшманӗсене—буржуалла националиссене, троцкиссене, бухаринцӑсене тата тӗрлӗ вышни некепиталисене тӗпе-тымарӗпех тата пӗр хӗрхенмесӗр кӑкласа пыракан алӑра пулмала.

Ник. Пушкин.

Пуху пулса иртрĕ

Декабĕрĕн 20-мĕшĕнче ВЧК—ОГПУ—Шалти ĕçсен халăх комиссариачĕ 20 çул тултарнă йатпа Чăвашсен йалхуçалăх институтĕнчи студентсемпе преподавателсен пухувĕ пулса иртрĕ. Пухура ВЧК—ОГПУ—Шалти ĕçсен халăх комиссариачĕ 20 çул тултарни çинчен институтри преподавател Љубимов йулташ доклад туса пачĕ.

Докладчик уйрăмăнах çак 20 çул хушшинче ВЧК—ОГПУ—Шалти ĕçсен халăх комиссариачĕ халăх тăшманĕсене, троцкисла-бухаринла бандăсене çĕмĕрсе пыни çинчен тĕплĕн каласа пачĕ. Çавнашкалах докладчик Дзержинский йулташăн ĕçĕсемпе пурнăçĕсем çинчен каларĕ.

Доклад хыççăн студентсемпе преподавателсем хăйсен шухăшĕсемпе кăмăлĕсем çинчен тухса калаçрĕç. Вĕсем хăйсен сăмахĕсенче халăх тăшманĕсемпе малашне те ырми-канми кĕрешсе пыма, револуцилĕ сисĕмлĕхе вăйлатма пулчĕç.

Йулашкинчен институтри военрук Черневский йулташ тухса калаçрĕ. Вăл студентсемпе преподавателсене вăрçă ĕçне вĕренессине малашне татах та вăйлатма чĕнчĕ.

И. Данилов.

Митинг пулчĕ

Чăвашсен йалхуçалăх коммунисла аслă шкулĕнче ВЧК—ОГПУ—НКВД 20 çул тултарнă йатпа митинг пулса иртрĕ. Митингра доклад итленĕ хыççăн, профессорсемпе преподавателсем тата студентсем НКВД оргăнĕнче ĕçлекен мухтавлă чекиссене саламларĕç. Пухува пынисем троцкисла-зиновйевла-бухаринла бандăсене çĕмĕрнĕ çĕртре НКВД оргăнĕсене йаланах пулăшса пыма сăмах пачĕç.

Г. Иванов.

Лебедева йулташăн рекорчĕ

ВОЛОГДА, декабĕрĕн 19-мĕш. (ТАСС). Грйазавецк районĕнчи Ворошилов йачĕпе тăракан колхозри стахановкă Александра Петровна Лебедева йĕтĕн сӳсĕ тылланă çĕрте çĕнĕ рекорд тунă. Сталин йачĕпе вахтăна тăрса, Лебедева йулташ Санталов урапипе 10 сехет хушшинче 907 килограм сӳс тылланă.

— Ĕç нормисене епĕ,—тесе каласа парать Лебедева,—виçĕ çул хушши ĕнтĕ тăтăшах иртерсе тултаратăп. Малтанхи вăхăтра нормă тăрăх 20 килограм тыллас вырăнне епĕ 10 сехет хушшинче Санталов урапипе 70 килограм таран сӳс тыллаттăм. Сталин йачĕпе вахтăна тăрса епĕ 10 сехет хушшинче 900 килограм тыллама обйазателствă илтĕм те, 907 килограм ĕçлесе кăлартăм.

Ĕçленĕ вăхăтра манăн билсем тĕрĕс вырнаçнине уйрăмах хытă сăнаса тăмала пулчĕ, вĕсем хăмаран 2—5 сантиметртан айакра мар выртмала. Манпа пĕрле татах виçĕ колхозницă ĕçлерĕç. Вĕсенчен пĕри йĕтĕн çурăмĕсем хатĕрлесе тăчĕ, иккĕшĕ—тылласа хатĕрленĕ сӳсе пуçтарса тăчĕç. Çапла тунипе епĕ ытти ĕçсемпе чăрманмарăм, татти-сыпписĕр тылласа тăтăм.

(ТАСС).

Совет патриочĕн куçĕ вичкĕн

Мухтавлă пограничниксене—чекиссене вĕсен хăйулă ĕçĕнче ĕçсыннисем пысăк пулăшу параççĕ. Пирĕн йенне каçнă тăшман, халăх сыхăлăхлă пулнипе, хăвăрт тытăнса сийенсĕрленет. Акă вăл сыхăлăх мĕн тери вăйлă пулнине уççăн кăтартса паракан фактсем.

... Йуханшыв хĕрĕнче çăра хăмăш ӳссе ларнипе уса курса, совет çĕршывĕ çине чикĕ урлă пĕр çын каçнă. Вăл кунта нимрен те хăрамалли çук-ха, тесе шутланă та, пĕр йала пырса кĕнĕ. Анчах чикĕ хĕрĕнче пурнакан çынсем—йалсовет председателĕ Безверженкопа колхоз председателĕ Полешчук тăшмана сиснĕ. Паллă мар çынна тытса заставăна илсе кайнă. Вăл пĕр йутçĕршыв шпионĕ пулнă мĕн.

... Вăрман об'йезчикĕсем—Будниковпа Чубыкин чикĕрен айакрах мар вăрманта ӳсекен виноград пухнă. Сасартăк вĕсем пĕр паллă мар çын курнă, вăл çын йăвăç тĕмисен хушшинчен, сывăхра çын çук-и, тесе тиск р кайăк пек пăхкаланă.

Об'йезчиксем чĕнсен вăл тарма тытăннă. Анчах тарса хăтăлайман. Чубыкинпа Будников шанчăксăр çынна, пĕр йутçĕршыв шпионĕ пулнăскере, тытса чарнă.

... Декабĕр уйăхĕн пĕр каçĕнче совет çĕршывĕ çине пăрсем тата йăвăç тĕмисем хушшипе пĕр паллă мар çын каçнă. Вăл чикĕри постран иртнĕ те, пытанасса шанса шикленмесĕрех утнă. Анчах çамрăк колхозник Николай Василйев курнă та, йалсовет председателĕпе Головченкопа пĕрле ăна йарса тытнă. Вăл паллă мар çын пирĕн тăван çĕршывăн ылханлă тăшманĕ пулнă.

* * *

Чикĕре пурăнакансем тăшмана, вăл темле маскă тăхăнсан та, хăвăрт палласа илме вĕренсе çитрĕç.

Çавнашкалах боец-пограничниксем те ĕççынисен тăван çĕршывĕн—Совет Сойузĕн инçетри окраинин—Инçет-Хĕвелтухăç крайĕн хуралĕнче вичкĕн тăраççĕ. ВЧК—ОГПУ—Шалти ĕçсен халăх комиссариачĕн оргăнĕсем çирĕм çул тултарнă йатпа вĕсем социалисăм çĕршывĕн таса чиккисене тата çивĕчрех сыхлама обйазателствă параççĕ.

(ТАСС).

ЙАПОНИ ЗАХВАТЧИКĔСЕМ КИТАЙРИ МИРЛĔ ХАЛĂХА ВАРВАРЛА ВĔЛЕРЕÇÇĔ.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Китай хĕрарăмĕ хăйĕн ачине тата пурлă-суклă йапалисене йатса, унăн çуртне çĕмĕрекен Йапони бомбардировщикĕсенчен тарса хăтăлать. (Шанхай). (Сойузфото).

Китайри вăрçă

Китайри центрти фронтра халђхи вăхăтра Ханчжоу районĕнче (кăнтăр секторĕ) вăйлă çапăçусем пыраççĕ.

Йапони çарĕн чаçĕсем Ханчжоу çине тăватă колоннăпа наступлени тăваççĕ: çурçĕр-хĕвелтухăç йенчен—Шанхай—Ханчжоу чукунçулĕ тăрăх; Шанхай—Ханчжоу шоссе çулĕ тăрăх; Цэйасин—Ханчжоу каналĕпе тата Хучжоу—Ханчжоу шоссе çулĕ тăрăх.

Йапонецсем тем пекех тăрăшсан та Ханчжоу патне пырайман.

Китай отрйачĕсем йапонецсен тылĕнче операцисене активлă сарса пыраççĕ. Çавăнпа йапонецсен тылра пысăк вăйсем хăвармала килет. Декабĕрĕн 18-мĕшĕнче Йапони çарĕн 800 çынлă чаçĕ Шицзйаоран (Хучжоуран кăнтăр йенче) кăнтăр йенелле кайнă. Çав çар çине Китай отрйачĕ тапăннă. Йапонецсем, Китай çарĕ тапăннине тӳсеймесĕр, нумай çухатусем тӳссе Шицзйао патне кайала чакнă, унта вăйлă çапăçу пулнă. Чакнă чухне йапонецсем хĕçпăшалсемпе аммуници нумай пăрахса хăварнă.

(ТАСС).

Суйлав кампанин активисĕсене ответлă ĕçсене лартаççĕ

Хусанта суйлав кампани вăхăтĕнче хăйсене ĕçре палăртнă вуншар активиссене, партире тăракансене те, партире тăманнисене те, партипе совет тата хуçалăх организацисенче ответлă ĕçе лартаççĕ.

„Светоч“ фабрикĕн механик помошникне Ахметов йулташа, участкăри суйлав комисси председателĕ пулнăскере, коммуналлă хуçалăх пайĕн пуçлăхĕ тунă. Комсомолкă Исхакова йулташа, участкăри суйлав комисси секретарĕ пулнăскере, райсовет инструкторне, доверенный Пољаков йулташа—заводри парти кабинечĕн заведуйущине лартнă. Агитатор Латыпов йулташа Вахитов йачĕпе тăракан жиркомбинатăн парти комитечĕн секретарне суйланă.

Хулари Сталинскипе Молотовски районĕсенчи суйлав кампанинчи активиссене 28 çынна партилĕ тата хуçалăхла ответлă ĕçсене лартнă.

(ТАСС).

Представителсен палати Рузвељт тунă саккун пройектне йышăнман

ВАШИНГТОН, декабĕрĕн 19-ш. (ТАСС). Представителсен палати 198 сасăна хирĕç 216 сасă ытларахăшпе Рузвељтăн чи пĕчĕк ĕç укçи тата чи вăрăм ĕçкувĕ тума пăхса хунă саккун пройектне пăрахăçланă.

Республиканцăсем кăнтăр штатсенчи реакцилĕ демократсемпе тунă коалици саккун пройектне йышăнмасăрах хăварттарнă.

Људендорф вилнĕ

Декабĕрĕн 20-мĕшĕнче Мӳнхен хулинче (Германи) Људендорф генерал вилнĕ.

Људендорф 1865 çулти апрел уйăхĕнче çуралнă. Тĕнчери империалисăмла вăрçă вăхăтĕнче—1914 çултан пуçласа 1916 çулччен—хĕвелтухăç фрончĕн генералђнай штаб начаљникĕ пулнă. 1916 çулта Људендорфа Германин пĕтĕм çарĕн штаб начаљникĕ туса хунă.

Људендорф Мӳнхенра гитлерла пăлхав организаторĕсенчен пĕри пулнă.

(ТАСС).

„Тĕрĕс... тĕрĕс мар“.

„Факты полностью не подтверждаются, Павлов выпивает, но в канцелярии никого не ругает...“, тесе пĕлтерет Вăрмар райĕçтăвком секретарĕ Иванов йулташ Арапуç йалсовет председателĕ Павлов çинчен çырнă заметкăна тĕрĕсленĕ хыççăн.

Йалсовет председателĕ Павлов йалан ӳсĕр çӳрени çинчен, вăл йалсовет председателĕ пулса ĕçлеме пултарайманни çинчен çырнăччĕ йалкор. Иванов шутланă тăрăх, Павлов ĕçлет пулсан та вăл йăваш çын: ӳсĕрпе никама та вăрçмасть, хĕнемест, ури çинчен ӳкмесен канцељарине те çӳреме пултарать. Çавăнпа та „факты полностью не подтверждаются“—Павлов председателе тивмеле мар иккен.

Вăрмар райĕçтăвкомне тепĕр заметкă—Чупай йалсоветне кĕрекен шкулсенчи учителсене хватер укçи паманни çинчен йанăччĕ. Ку заметкă тĕлĕшпе Иванов çапла çырать:

„Факты изложенные в заметке подтверждаются... 1. Казаков, 2. Горностаев, 3. Иванова и 4. Муклаков действительно с ноября 1936 года не получали квартплаты“. Но „по имеющимся справкам от пред. Чубаевского сельсовета тов. Скворцова квартплата учителям уплачена в сумме 938 руб. коп. 00, о чем доводится Вам для сведения“.

Вот, пыр та калаç Ивановпа. Малтан хăй фактсем тĕрĕс тет, кайĕнрахран учителсене „в сумме 938 руб. коп. 00“ панă тет. Хăшĕ тĕрĕс, хăшĕ тĕрĕс мар—те 938 руб., те 00 коп. çеç тӳленĕ—ăнланма йăвăр.

Кунта çакна çеç лайăх ăнланма пулать—вăрмарсĕм ĕççыннисен жалăбисем тăрăх ĕçлеме йуратмаççĕ. Ăна çак факт лайăх кăтартса парать (Иванов пĕлтерни тăрăхах:

„Статья „Продовољстви тыррипе кирлĕ пек уса курмала“... от 11 июня с. г., сдана была на проверку Урмарск. Райзо тов. Афанасьеву—Инспектору по учоту, тот после ухода в Армию передал Терентьеву — Инспектору по учоту. Данный материал сейчас находится у нового Зав. Урмарским Райзо в стадии проверки...“.

Ку вăл капла пултăр-ха. Ку вăл жалăбăсене аларан алла парса çӳретсе жалăбă тăрăх нимĕн те туманнине пĕлтерет. Анчах, вăрмарсем аларан алла çӳретмесĕр те, 7—8 уйăх хушши пĕр çын алличе тытса тăрсан та пăхса тухмаççĕ.

„Статья „Ирсĕрлĕхе пĕтересчĕ“... от 15 мая с. г... на проверку была сдана 15 мая Зав. Урмарским Райзо тов. Семенову и срок был установлен до 30 мая с. г., но несмотря на это Райзо не дает ответа“ (!?),—тесе пĕлтерет Иванов секретар.

„По окончании проверки ответ будет сообщен“, пĕлтерет йулашкинчен Иванов. Çук, жалăбăсене пăхса тухас ĕç сирĕн çавăн пек „хăвăртлăхпа“ пыракан „окончание проверки“ пуличчен ответ кĕтсе тăраймаçтпăр епĕр Иванов йулташ. Жалăба 7—8 уйăх хушши выртсан пире сирĕнтен „ответ“ та кирлĕ мар пулать. Малашне те çавăн пек пулсан, урăхла ответ çинчен калаçмала пулать сирĕнпе Иванов йулташ. Тен, прокурор халхине кĕрсен халех те калаçса илмеле пулĕ.

М. К.

Тӳрлетни

„Чăваш Коммунĕ“ хаçатăн декабĕрĕн 21-мĕшĕнче тухнă 292-мĕш номĕрĕнче корректурăлă йăнăшсем кайнă. 2-мĕш страницăра „Ваттисен савăнăçĕ“ йатлă статйан тăваттăмĕш абзацĕнче „права пĕртанлăхĕ“, государствă“ тесе тӳрлетсе вуламала.

1-мĕш страницăри клише айне Ибаррури йулташ йатне тĕрĕс çырман, ăна Долорес Ибаррури тесе вуламала.

Ответлă редактăр заместителĕ И. П. ПАВЛОВ—ПИНЕР.

„Ленин Октăбĕрте“

А. Каплер сценарийĕ тăрăх ӳкернĕ фиљм. Режиссерĕ М. Ромм. „Мосфильм“ кăларнă.

Çак кунсенче Шупашкарти калаçакан кино-театрта „Ленин в Октябре“ йатлă сасăлă илемлĕ фиљм кăтартма пуçлаççĕ.

„Ленин в Октябре“ йатлă фиљм Октăбĕрти Социалисăмла аслă револуци умĕнхи кунсенче, хĕçпăшаллă восстание хатĕрленсе тĕлĕнне большевиксен партийĕ ывăнма пĕлмесĕр ĕçленине, Ленинпа Сталин восстание тӳррĕмĕн йертсе пынине кăтартса парать. Çак фиљма пăхакансем кашниех Владимир Илича, вăл хăйĕн пĕтĕм хастарлăхĕпе партине рабочи клас вăй-хăватне капиталисăм йĕксене тĕпрен аркатса пăрахма организацилени курăççĕ. Çав историлĕ кунсем мĕнле пулса иртнине, меншевиксемпе ес-ерсем буржуазине килĕшсе пĕрленнине, Каменевпа Зиновйев çак револуци иртреихĕрсем хĕçпăшаллă восстание иртермелле больщевиксен планне буржуазине панние, вĕсем йĕрĕнчĕклĕн, ирсĕр измена тунине, вĕсен контрреволюцилĕ ĕçĕсене, пурне те питĕ уççăн та витĕмлĕн картинăра кăтартса панă.

Çак фиљма пăхакансем Ленин хастарлă ĕçре пулнине, Владимир Илйичпа Сталин курнăçнине, Тĕп Комитетăн историлĕ ларуне, Зимний Дворецă штурмăланине, Вăхăтлăх правителствăна арĕсленине т. ыт. те курăççĕ. Кам парти истори тăрăх Октăбĕр кунĕсенчи кĕрешӳсем çинчен пĕлет, çавă Октăбĕр кунĕсенче пулса иртнĕ кĕрешӳсене хăй куçĕпе курать.

Ленин роље СССР Халăх артисĕ Шчукин выљать. Вăл социалисăмла револуцин генилĕ çулпуçĕн—Владимир Илйич Ленинăн вилĕмсĕр образне витĕмлĕн те ĕнентерӳлĕн кăтартать.

Пайан епĕр А. Каплер сценарийĕнчен пĕр сыпăкне куçарса пичетлетпĕр. Вăл пирĕн вулакансене „Ленин в Октябре“ йатлă питĕ паха фиљмпа паллаштарать.

* * *

Малтан каласа татăлнă пек шаккаççĕ.

Анна Михайловна Василине алăк уçать. Унăн аллинче пĕчĕк хаçат çыххи.

— Бельевой!

Анна Михайловна чĕнмесĕр пусне сулать. Василий чĕнмесĕр утса пӳлĕме кĕрет. Илйич пусне çĕклет, çикĕ тăрать:

— Парăр, парăр, сывă-и...

Вăл хăвăрт хаçатсене илет, вĕсене çав тери тимлĕн пăхма тытăнать:

„Новая жизнь“... „День“... Çапла „Единство“... „Новое время“... Итлĕрха, мĕнпе сĕтĕ „Маленькая газета“-на пулмалла[illegible].

— Вăл хулинăла хаçат, вăл çирекинь-мар пуль, тесе шутлашрăм.

Ленин: Чăн та. Меншевиксем хăйсене кăмăлласа ... [illegible] çинчен пулĕ? (Пӳлĕм тăрăх утмалла пуçлать). Мĕнле ăнланмалла мар. Василий йулташ, пирĕн таймансен пусмаллăвĕн кăмăлĕн калани сансах пымала...

Илйич пӳлĕм тăрăх тĕмисе утăм чупса карĕ, ларчĕ, Василий çине пăхрĕ:

— Ну, йурĕ...

— Çук, епĕ кӳрĕнместĕп, Владимир Илйич, ăнланатăп, тĕрĕс мар тӳрăм. Ун пекех ухмах мар епĕ.

Илйич кулакан куçĕсене хĕссе, Василий çине пăхать:

— Гм... Мĕй есĕр ун пекех хытă...

Хупса калать:

— Ыран илĕс килĕр.

Илйич хаçата уçать. Вăл уйăне пукан çине пусса, тăрса вулать. Страницăна пĕтĕмпех пăхса тухать те, чавсине сĕтел çине тайанса вулать.

Кăмака вутă çатăртаткалать.

Василий стена çумне тайанчĕ. Вăл ывăннине халран кайнă, ăшăна ĕнтĕркесе çитнĕ, хăйĕн халсарлăхĕпе кĕрешме вăл сĕтеревмен пирке, сывăрмасăр пиçĕхсе, кайни куçĕсене хупать.

— Итлĕр-ха, есĕр каллех сывăрман-и?

Илйич хаçат страницин çинчен куçне çĕклесе Василий çине пăхать.

— Ман шутпа, есĕр те сывăрмастăр, Владимир Илйич,—ыçăмсăр ответлет Василий.

— Епĕ сирĕн çинчен калатăп!.. Йурамасть апла, Василий йулташ. Чимха, пĕр кун та есĕр мана улталарăр.

— Пайан ĕнтĕ сывăрса тăранатăп... Тӳрĕ сăмах...

— Пайан? Гм... Çук, пайан пушшех нимĕн те тухаймасть пулĕ. Тепĕр тесен, влаç кĕçех пирĕн пулать, ун чух вăра...

Илйич каллех хаçат çине пĕшкĕнсе пăхма пуçлать:

— Гм, гм... Ун чухне пушшех сывăрма лекмест.

Василий пукан çине ларать те, хăйĕн кăмăллă кулнине чараймасăр çав самантрах сывăрса кайать.

Илйич пĕр хаçат хыççăн теприне саркаласа пăхать, час та часах уншăн характерлă „гм... гм...“ тени вĕçĕмсĕр илтĕнет—ку ĕнтĕ те иккĕленĕв сыхланăвĕ, те вичкĕнĕн тăрăхласа кулни, те тревога, те çырлахнине пĕлтерет.

Сасартăк Илйич хаçат листи çинче чарăнса тăрать. Василий вăранать, куçне уçать.

— Мĕнле ирсĕрлĕх!..

Илйич сĕтел çине пĕшкĕнерех тăрать. Хаçат строкисене тата тепĕр, хут хăвăрт пăхса тухать. Кайран тӳрленсе тăрать.

—Мĕнле чиксĕр ирсĕрлĕх... Намăслăхăн чикки ăçта-ши?

Василий тем пуласса кĕтнĕн Илйич çине пăхать. Сĕтелрен уйăрăлса, Илйич пӳлĕм тăрăх утать, каллех сĕтел патне пырать, хаçат çине пăхать, каллех кăмака патне кайать. Вăл пукан хĕррине ларать, алтупанĕне куçне хупласть. Сулăм йалтăравĕ Ленинăн пысăк çамкине алли çинче выљаса тăрать.

Канăçсăрлăх тытăнине лекнĕ Василий сĕтел патне пырать. Сĕтел çинче выртакан „Новая жизнь“ хаçата тупать, вулать:

„Ю. Каменев о выступлении... вооруженное восстание... обречено на поражение... губительные последствия — шаг отчаяния“.

Илйич тăрать те хăвăрт чӳрече патне пырать. Илйичăн сăн-пичĕ çак самантра мĕнле пулнине çырса кăтартма питĕ йăвăр. Вăл сасартăк кĕтмен çĕртен улшăнчĕ, нумай сехет хушши, тен, темиçе çул хушши иртсе кайнă хыççăнхи пекех улшăнчĕ вăл. Çилĕлĕ хĕрӳлĕх унăн сăн-питне вичкĕнлетрĕ, тутисене хĕстерчĕ, куçĕсенчи кăмăллă кулла сӳнтерчĕ, ун ырăнне вăл вĕсене урăх çулăмпа, хайарлăх çулăмĕпе хыптарчĕ. Куç хуршийĕсем хушшинче, сократла çамка çине çилĕлĕ хĕрӳлĕх тарăн йĕр хыврĕ.

Илйич хăвăрт çаврăнать:

—Вулăр Василий йулташ!.. Кăмăллăра çырлахтăр, мĕнле вĕсем свйатошăсем... Çав политикăла проституткăсем пире сутрĕç! Тĕп Комитет планĕсене тăшмансене пачĕç!.. Бандитсем!

Илйич хăй аллине Василий хулпуççи çине хурать, çирĕппĕн чăмăртать ăна, унăн пичĕ çине тинкерсе пăхать:

— Халех Сталин тата Свердлов патне кайăр. Калăр вĕсене, манăн вĕсемпе халех курнăçмала, çак минутрах. Кайăр. Хăвăртрах кайăр.

Василий Илйича аллинчен йарса тытать. Çак çын пĕр минут кайарах хăйĕн ывăнхине кĕрешме пултарайманнине ĕненме йăвăр.

— Йурĕ, кайăр,—тет Илйич, Василине сăмахсăрах ăнланса.

Василий тухать. Илйич вăл кайнине пăхса йулать. Василий пусма çине тухать, тутисене пăчăртаса хупнă алăк умĕнче самантлăха чарăнса тăрать вăл, кайран пусма тăрăх айалала чупать.

Илйич каллех сĕтел çине пĕшкĕнет, каллех, мăçамĕш хут-ши, унашкал заметкă пулма пултарнине ĕненмен пек пулса заметкă çине пăхкалать.

Вара сасартăк хаçата ывăтса йарать те çырма ларать...

„Письмо к членам партии большевиков“.

Вăл заголовкăпа айĕнчен чĕрет.

— Пĕрремĕш... Ирсĕр измена...—çилĕллĕн пăшăлтатать Илйич.

Унăн чĕри хут тăрăх чупать.

1938 ÇУЛХИ НАЛОГ РЕГИСТРАЦИЙĔ ÇИНЧЕН

Налог законодателствипе шайлăн, ЧАССР Финанс Халăх Комиссариачĕ пĕлтерет:

1. Обществăлă сектăрти хăйсем оборотран налог тӳлекен, бюджет наценкине тата специаљнăй навеккăсене тӳлекен, таварлă мар операцисенчен налог тӳлекен, совхозсенчен, киноран налог тӳлекен, доход тăрăх илекен налога тӳлекен усламран отчислени тӳлекен хуçалăхлă организацисемпе уйрăм предприйатисен 1938 çулхи йанварĕн 1-мĕшĕччен хăйсен вырăнĕнчи финанс пайĕнче, йышăннă формăлă регистраци картăчкине парса, регистрацине тăмала.

2. Вĕсен оборотĕнчен централизацилĕ йĕркепе налог илекен предприйатисен йанварĕн 15-мĕшĕ тĕлне хăйсен организацин справкине тăратмала,—справки çав организаци çине налог хуракан вырăнти финанс оргăнĕ çирĕплетнĕскер пулмала.

3. Çак пĕлтерӳре кăтартса панă срукра финанс оргăнне регистрацилĕ картăчкă йе справкă тăратман организацисемпе предприйатисем çине взысканисем хураççĕ.

Регистраци картăчкисемпе справкăсен формисене районсенчи тата хуласенчи финанс пайĕсем параççĕ.

Чăваш АССР Финанс Халăх Комиссарĕ ЗАХАРОВ.

ЧĂВАШ ГОСУДАРСТВĂ ПЕДАГОГИКĂ ИНСТИТУТĔНЧЕ

ЗАОЧНĂ ВĔРЕНЕКЕН СТУДЕНТСЕНЕ

1938 çулхи йанварĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа 10-мĕшне çитиччен

иккĕмĕш, виççĕмĕш тата тăваттăмĕш

курссенчи иур факуљтетсенче те заочнă вĕренекен студентсен заочнăй сессийĕ пухăнать.

Тăваттăмĕш курсра вĕренекенсенчен государствă екзаменĕ тытма ирĕк панисем пухăнмаççĕ.

Асăрхаттарни: 1-мĕш курсра заочнă вĕренекен студентсем шкулсенче каникул пулнă вăхăтра екзамĕн пама института килме пултараççĕ.

Дирекци.

Çутĕç Халăх комиссариачĕ.

Чăвашсен Йалхуçалăх Институтне

Аслă шкулсене вĕреме кĕме хатĕрлев курссене ваљди преподавателсем к[illegible]

Вырăс чĕлхипе
Математикă тăрăх
Физикă тăрăх
Географи тăрăх
Нимĕç чĕлхипе

Зайавлевисене кирлĕ документсем 1937 çулти декабĕрĕн 25-мĕшĕччен çак респе памала: Шупашкар хули, Ленинг[illegible] урамĕ, 19. Йалхуçалăх Институчĕ.

3—2

Пăрачкав районĕнчи ГАРТРИ промколхоз членĕсем 1937 çулта нойабĕрĕн 11-мĕшĕнче йышăннă тăрăх промколхозăн

ПРОМЫСЛА ПАЙНЕ

Гартри Чкалов йачĕпе тăракан вăрман промысла артелне

ПАМАЛА ТУНĂ

Претензисене çак пĕлтерӳ пичетленнĕ хыççăн икĕ ерне хушшинче памала.

Мособлпищепромсойузăн Чăваш республикĕнчи кантур[illegible] тата районсенчи хатĕрлев пункчĕсене те

ПĔТЕРМЕЛЕ ТУНĂ

Претензисем пулсан 1938 çулхи йанвар[illegible] 1-мĕшĕчен çак адреспе памала: Шупашкар хули, Ленин урамĕ, 14. Мособлпищепромсойузăн Чăваш Республикĕнчи к[illegible]турĕ.

ЛИКВИДКО[illegible]

„Средняя школа на дому“ йатлă кĕнекесен подписчикĕ[illegible] асăрхаттарни

Вĕренмелли кĕнекесене 1938 çулхи уйăхĕнче пичетрен тухасса кĕтеççĕ.

Çавăнпа та, çак кĕнекесем пичетрен хасса вĕтес мар текен подписчиксем ленĕ укçисене кайала илме пултараççĕ.

КОГИЗ-ăн Чăваш республикĕнчи уйрă[illegible]

„Чăваш Коммунĕ“ çырăнса илмелли хакĕ: 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха—7 т. 50 пус., 1 уйăха—2 т. 50 пус. Кăçырăвсене кайала памаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 975. Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 2370. Тираж 13780. [illegible]